Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

48 (8114) № ✻ Шăмат кун, 2013 çулхи утă (июль) уйăхĕн 6-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Тахçантанпах кĕтнĕ парне

**Культура**



Шăпах çапла каламалла пулĕ пысăк калăпăшлă реконструкци ĕçĕсем туса ирттернĕ хыççăн июлĕн 3-мĕшĕнче Мăн Сĕнтĕрте çĕнĕ информаципе культура центрĕ уçăлнине. Мăн Сĕнтĕр яш-кĕрĕмĕ кăна мар, çывăхри ялсенче пурăнакансем те тем пекех кĕтнĕ ăна. Çитменнине ку центр çамрăксем валли кăна мар, çулланнисем те, ыттисем те хаваспах çӳрĕç кунта малашне. Информаципе культура центрĕ ял çыннисене тивĕçтерекен пулăшу ĕçĕсен калăпăшĕ те малашне ӳссе пырĕ кăна.

Çĕнĕ центр хута кайнин пĕлтерĕшĕ пысăк пулнине çакă та çирĕплетет. Ăна уçма Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, культура, национальноç тата архив ĕçĕсен министрĕ Вадим Ефимов, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Николай Ванеркин, ытти хăнасем килсе çитрĕç, церемоние район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев, район пуçлăхĕ Игорь Николаев, райадминистрацин ответлă ĕçченĕсем, ял çыннисем чылай хутшăнчĕç.

Каласа хăварас пулать, 1991 çулччен Мăн Сĕнтĕрти Культура çурчĕ Çветуй Троица чиркĕвĕпе унти пристрой çуртĕнче вырнаçнă пулнă. 1991 çулта чиркĕве Шупашкар-Чăваш епархине таварса панă, Культура çурчĕ вара пристройра юлнă. Пĕр çуртрах кăнтăрла Турра ĕненекенсем кĕлĕре тăнă, каç-каç вара кунта çамрăксен юрри-кĕвви янăранă. Ниепле те килĕшӳллĕ мар.

2005 çулта пуçламăш шкул çуртĕнчен культурăпа кану центрĕ йĕркеленĕ. 2012 çулта кунта реконструкци ĕçĕсем пуçланнă. Хальхи информаципе культура центрĕ вара – паянхи кун ыйтăвĕсене тивĕçтерекен пысăк объект. Ăна чи пысăк стандартсене тĕпе хурса çĕкленĕ. Кунта çынсене пахалăхлă услугăсемпе тивĕçтерме пур условисене те туса панă. Ăна хăйĕн салам сăмахĕнче республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та палăртрĕ.

– Ку вăл эпир хăнăхнă клуб учрежденийĕ мар ĕнтĕ, – терĕ вăл. – Хальхи технологисем тапхăр-тапхăр пурнăçа кĕрсех пырĕç. Яшсемпе хĕрсем кăна мар, çулланнисем те кунта çӳреме, пĕр-пĕринпе хутшăнма, пĕтĕм тĕнчепе çыхăнма пултарĕç.

Михаил Васильевич информаципе культура центрне сцена ăстисем валли тумтир туянма 99850 тенкĕлĕх сертификат, телевизор парнелерĕ.

Уяв программи малалла тăсăлчĕ. Александрăпа Виталий Никитинсем çемье çавăрса 53 çул пурăнаççĕ. Иккĕшĕ те ĕмĕрĕпех «Знамя труда» колхозра ĕçленĕ, «Ĕç ветеранĕ» ята, тĕрлĕ наградăсене тивĕçнĕ, 5 ача пăхса ӳстерсе ура çине тăратнă. Республика Пуçлăхĕ Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕ умĕн вĕсене «Юратупа шанчăклăхшăн» орден парса чыс турĕ.

Виççĕмĕш ача çуралнă май Трофимовсемпе Грачевсен çемйисене Михаил Васильевич ача амăшĕн (çемье) капиталĕн сертификачĕсене пачĕ.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев çак кун Мăн Сĕнтĕрте пурăнакансемшĕн кăна мар, пĕтĕм район çыннисемшĕн асра юласса палăртрĕ. Юлашки вăхăтра районта çĕнĕрен çĕнĕ объектсем хута яма пултарни экономикăпа социаллă аталану тăнăçлăхĕ пирки калать.

Пухăннисене «ПМК Водоснабжения» ООО генеральнăй директорĕ Валерий Павлов, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Николай Ванеркин, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи çамрăксен канашĕн председателĕ Евгения Лаптева саламларĕç.



Михаил Игнатьев информаципе культура центрĕн çурчĕпе пӳлĕмĕсене, курав залне, вокалпа инструментсен «Картина» халăх ансамблĕн, ташăпа юрă «Янаш» халăх ансамблĕн студийĕсене пăхса çаврăнчĕ, ачасен тата аслисен абонемент студийĕнче, художество мастерскойĕнче, библиотекăра, курав залĕнче пулчĕ. Студисемпе кружоксене çӳрекен ачасем Чăваш Ен Пуçлăхне хăйсем мĕнпе интересленни, мĕнле вĕренӳ заведенийĕсене вĕренме кĕме хатĕрленни, малашне мĕнле професси суйласа илесси пирки каласа пачĕç. Çав вăхăтра 150 вырăнлă курав залĕнче «Янаш» концерт программипе савăнтарчĕ. Михаил Васильевич та залра пулса коллектив пултарулăхне хаклама кăмăл турĕ.

Июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса кунтах çынсене «пĕр чӳрече» мелĕпе патшалăх тата муниципалитет услугисемпе тивĕçтерекен нумай фнкциллĕ центр ĕçлеме тытăннă. Республика Пуçлăхĕ унăн ĕçĕпе те паллашрĕ, сĕнӳсем пачĕ.

«Кĕтнĕ ĕмĕт тинех çитрĕ» – савăнать Мăн Сĕнтĕрте паян кашни.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

**Сăмах – район администрацийĕн ĕçченĕсене**

## Ĕçлемесĕр пулăшу кураймăн



***Симĕс ĕç çи анлă сарăлнипе пĕрлех уйхирсем саралма пуçлани черетлĕ вырма алăкран шакканине пĕлтерет. Мĕнле шухăш-ĕмĕт канăç памасть паян çĕр ĕçченне? Çак ыйту çине хурав тупма район администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан В. АНАНЬЕВПА çыхăнтăмăр.***

– Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем уяр кунсемпе тулăхрах усă курса паян, тĕпрен илсен, паха утă ытлă-çитлĕ янтăлассипе ĕçлеççĕ. 3371 гектар çинче çулнă нумай çул ӳсекен курăксенчен пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен ĕçченĕсем утă уйăхĕн 5-мĕшĕ тĕлне обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли пĕтĕмпе 3725 тонна (69 процент) паха утă янтăлама ĕлкĕрчĕç. Утă хатĕрлес плана Чкалов яч. хис., Е. Андреев яч. хис. хуçалăхсем ирттерсе те пурнăçларĕç. Ку ĕçсем Суворов яч. хис., «Свобода», «Ударник» хуçалăхсемпе «Путь Ильича» агрофирмăра та калкал пыраççĕ. Вĕсем утă хатĕрлессипе ума лартнă тĕллевсене 73 – 57 процент пурнăçланă.

Утă янтăланипе пĕрлех малашлăха пăхакансем ĕç вăйĕсене сенаж хывса хăварас çĕре те хутшăнтараççĕ. Ку ĕçе те кая хăварас марччĕ. Хальлĕхе сенаж хывма виçĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăхра массăллăн кӳлĕннĕ: «Ударник» 1500 тонна хатĕрленĕ (111 процент), «Герой» 800 тонна (123 процент) тата «Восток» 108 тонна (36 процент) хывса хăварнă.

Ыранхи куна пăхса ĕçлекен хуçалăхсен кĕр кунĕсем çитиччен пĕтĕмпе 5430 тонна паха утă, 11950 тонна сенаж тата 25600 тонна силос янтăлама ĕлкĕрмелле. Паянхи ĕçсен хăвăртлăхĕ пирĕн хуçалăхсем палăртнă карта ларасси иккĕлентермест, анчах ăна валли çĕр ĕçченĕн иртен пуçласа каç сĕмĕччен çанă таварса ĕçлемелле.

Умри ĕçсене çителĕклĕ те паха тума пултарсан çеç эпир патшалăх пулăшăвĕпе туллин усă курма пултаратпăр. Сăмах май кăçалхи 5 уйăхра районти агропромышленность комплексĕн предприятийĕсем федераци тата республика бюджечĕсенчен пĕтĕмпе 43242759,35 тенкĕ пулăшу илме хевте çитерчĕç. Тăрăшуллă ĕçлесен, ума лартнă тĕллевсене вăхăтра пурнăçласан çак сумма татах та ӳсме пултарать.

Паян симĕс ĕç çире тăрăшнипех вырмана тухассипе те хатĕрленӳ ĕçĕсене пусăнма вăхăт. Паянхи лару-тăрупа çитес вырмара уй-хире пĕтĕмпе 63 «хир карапĕ» тухмалла. Вĕсене чăнах ĕçе кăларас тесен юсав ĕçĕсене паянах кӳлĕнмелле, комбайнсене механизаторсемпе комплектламалла. Ĕç килĕшĕвĕсем туса хире тухса кайиччен хăрушсăрлăх мероприятийĕсем ирттермелле. Вырмара «хĕрлĕ автана» çул парассинчен асăрхану ĕçĕсем, вĕрентӳсем ирттермелле. Йĕтемсемпе ампарсене çĕнĕ тырă йышăнма хатĕрлемелле. Çаксене вăхăтра пурнăçласан çеç вырма пирĕн патăмăра «ăнсăртран» килсе çитмĕ.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

**Раççейре**

## Паян Универсиада уçăлать

Пĕтĕм тĕнчери çуллахи 27-мĕш Универсиада паян Хусан хулинче уçăлать.

Универсиадăна 27 çул тултарман çамрăксем хутшăнаççĕ.

Старта 160 ытла çĕр-шывран килнĕ 9 пин ытла спортсмен тухать. Вĕсем спортăн 27 тĕсĕпе ăмăртаççĕ. 5 тĕсне пуçласа Универсиада программине кĕртнĕ. Пĕтĕмпе наградăсен 351 комплектне выляса илеççĕ.

Универсиадăна Раççей спортсменĕсем те йышлă хутшăнаççĕ. Вĕсем 72 регионтан.

Пирĕн республика ятне 7 спортсмен хӳтĕлет. Вĕсем çăмăл атлетикăпа тата ирĕклĕ майпа кĕрешессипе вăй виçеççĕ. А. Прокопьева, Н. Пучкова, В. Соколова, М. Пандакова, И. Юманова, К. Савицкая çăмăл атлетикăра тупăшаççĕ. Е. Краснова ирĕклĕ майпа кĕрешессипе ăмăртать.

Пирĕн районти Анаткас Апаш хĕрĕ Вера Соколова хăвăрт утассипе (20 çухрăм) старта июлĕн 10-мĕшĕнче тухать.

Универсиада июлĕн 17-мĕшĕнче хупăнать.

**Районта**

## Купăста сутаççĕ

Районта тырă-пулă тата çĕр улми туса илессипе ĕçленĕ хушăрах юлашки çулсенче пахча çимĕç те пусă çаврăнăшĕнче пысăк вырăн çĕнсе илчĕ. Юнкă тăрăхĕнчи «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра çак ĕç çине уйрăмах пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Кăçал та хуçалăх 12 гектар тĕрлĕ пахча çимĕç акрĕ-лартрĕ. Вĕсен шутĕнче купăсти те, кишĕрĕпе суханĕ те, ыхри те пур. Общество ертӳçи В. Кондратьев пахча çимĕçпе ĕçлени те тупăш панине пытармасть. «Пахча çимĕçе акни-лартнипе кăна тухăç пулмасть. Çакна шута илсе эпир хамăр патăмăрта пахча çимĕçе тумлам меслечĕпе шăварас технологие ĕçе кĕртрĕмĕр. Тăкакне кура – тупăшĕ», – терĕ Валерий Семенович. Калаçуран çакă та паллă пулчĕ. Юнкăсем ир пулакан купăстана сутма та пуçланă иккен. Çĕнĕ пахча çимĕçĕн малтанхи партийĕ Мăн Сĕнтĕр тата Муркаш райповĕсен магазинĕсен сентрисем çине тухнипе пĕрлех инçетри Ухта хулине те ăсаннă.

**А. ПЕТРОВ.**

Паян – Пĕтĕм тĕнчери кооперативсен кунĕ

# Ӳсĕмсем куç умĕнчех

**Район территорийĕнче халăха тĕрлĕ таварпа, услугăпа тивĕçтерессинче Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсен суту-илӳ точкисем тĕп вырăн йышăнаççĕ. Асăннă сферăри йĕркелĕхе, шайлашулăха район администрацийĕн экономика тата агропромышленность комплексĕн аталанăвĕн пайĕ тĕрĕслет. Çавна май эпĕ ку тĕлĕшри пĕтĕмĕшле ĕç-хĕле хаклама уяв умĕнхи калаçăва асăннă пай пуçлăхне Н. КОСТИНĂНА чĕнтĕм.**

– Чăвашпотребсоюз правлени тытăмне кĕрекен пирĕн районти икĕ райпо çулсеренех кăтартăва ӳстерсе ăнăçлă ĕçлесе пырать. Халăх ыйтăвне туллинрех тивĕçтерес тĕлĕшпе вĕсем тăтăшах тĕрлĕ çĕнĕлĕх вăя кĕртеççĕ: суту-илӳ точкисем, вăл шутра чи аякри ялсенче уçăлни, тавар ассортиментне пуянлатни-улăштарни, объектсене капиталлă майпа реконструкцилени, чылай лавккара самообслуживани мелĕпе ĕçлеме пуçлани тата ытти те.

Райпосем ӳсĕмлĕ ĕçленине ваккăн суту-илӳ тунин калăпăшĕ ӳснинчен те курма пулать, кăçалхи çур çулхи çак кăтарту – 453257 пин тенкĕ. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан вара 111, 7 процент.

Обществăлла апатлану предприятийĕсем 48248 пин тенкĕлĕх е 110,6 процент чухлĕ продукципе тивĕçтернĕ. Харпăр хăй производствин продукцийĕ 29199 пин тенкĕлĕх е 113, 5 процент туса кăларнă. Хатĕрлев ĕçне 46652 пин тенкĕлĕх е 126,4 процент пурнăçланă. Çапла вара пĕр çын пуçне тивекен асăннă райпосенчи тавар çаврăнăш 23592 тенкĕпе е 111, 7 процентпа танлашнă. Райпосен системинче 675 çын вăй хурать. Вĕсен вăтам ĕç укçи калăпăшĕ районти вăтам кăтартуран 28 – 30 процент пысăкрах. Пĕтĕмĕшле илсен вара икĕ райпо 2012 çулхипе пăхсан 57,8 миллион тенкĕлĕх бюджет тытăмне пуянлатнă. Ку вăл районти кăтартура 24, 9 процентпа танлашать.

Асăннă райпосен ĕçĕ-хĕлĕ тивĕçлĕ шайра, вĕсем республикăра та малтисен шутĕнче. Çак тĕлĕшпе йышăннă программăна ăнăçлă пурнăçлаççĕ. Эпĕ вара уяв çитнĕ май пурне те ăнăçу сунатăп, малалла та тĕллевсене туллин вăя кĕртме ырлăх-сывлăх пултăр.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**



## Ĕçре пысăк хисепре

***Эсир сăн ӳкерчĕкре Муркаш райповĕн тĕп бухгалтерне Ирина Яшмолкинăна куратăр. Пултаруллă та тăрăшуллă ĕçчен Чăваш Республикин экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илӳ министерствин Хисеп грамотине тивĕçрĕ.***

***Ирина Юрьевна асăннă райпора 1992 çултанпа тăрăшать. Çамрăк ĕçченсемшĕн ырă тĕслĕх вырăнĕнче, ыттисемшĕн – ăста та шанчăклă пуçаруçă.***

**Р. ИЛЛАРИОНОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

Хисеплĕ кооператорсем, пайщиксем тата суту-илӳ ветеранĕсем!

Сире пурне те професси уявĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Эсир кунсерен халăх ыйтăвне тивĕçтерес тесе тимлетĕр. Паянхи кун кăларса тăратакан йыврăлăхсем умĕнче çухалса каймастăр, вĕсене çĕнтерсе пырса, çирĕппĕн малаллах каятăр: суту-илӳ, обществăлла апатлану предприятийĕсене тĕплĕн юсама, çĕнĕ объектсене хута яма пултаратăр. Çапла майпа районта пурăнакансене çĕнĕ ĕç вырăнĕсемпе те тивĕçтеретĕр. Самообслуживани мелĕпе ĕçлекен магазинсен йышĕ те ӳссех пырать.

Çулсеренех эсир паракан пулăшусен шучĕ те, пахалăхĕ те ӳссех, суту-илӳ культурин шайĕ те хăпарсах пырать. Çакă хăех эсир хăвăрăн ĕçĕре юратнине, тивĕçĕре чун-чĕре хушнă пек пурнăçланине, эсир халăхшăн тăрăшнине кăтартса парать. Çулсеренех эсир Центросоюзăн Пĕтĕм Раççейри тата Чăвашпотребсоюзăн республикăри ăмăртăвĕсенче малти вырăнсене йышăнни, çак чикĕрен чакманни района чыс кӳрет. Сире районăн экономика аталанăвĕпе социаллă пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшнăшăн тав тăватăп. Малашне те ӳсĕм çулĕпе çирĕппĕн утма, çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тума ăнăçусем сунатăп.

Сывлăхăр чир-чĕр мĕнне ан пĕлтĕр, кун-çулăр вăрăм та телейлĕ пултăр. Çемьере килĕшӳпе тату пурнăç хуçаланччăр.

**В. АНАНЬЕВ, район администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ.**

Чăваш Республикин потребительсен кооперацийĕн хисеплĕ ĕçченĕсем тата ветеранĕсем!

Сире професси уявĕпе – Пĕтĕм тĕнчери кооперативсен кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Пирĕн çĕр-шыври потребительсен кооперацийĕ, вăрăм та кăткăс çул утса тухса, пĕр пĕтĕмлĕхне, хăйне евĕрлĕхне сыхласа хăварнă тата çаплипех пысăк вăй-хăвачĕпе палăрса тăрать. Коопераци юхăмĕ хăйĕн пĕлтерĕшне тата халăха социаллă пулăшу ĕçĕсемпе тивĕçтерес, производствăна пулăшас тата ял хуçалăх продукцине вырнаçтарас, республика экономикин конкурентлăхне ӳстерес ĕçри витĕмлĕхне ĕненмелле çирĕплетсе пачĕ.

Кăçал чăваш кооператорĕсемшĕн уйрăмах паллă тапхăр: Чăваш Республикин потребительсен кооперацийĕ йĕркеленнĕренпе 120 çул çитет. Çакна палăртма кăмăллă: коопераци юхăмне умри тĕллевсене пысăк яваплăхпа пурнăçлама пултаракан çĕнĕ ăру хушăнать.

Пуян историллĕ потребительсен кооперацийĕ унччĕнхи ăрусем никĕслесе хăварнă ырă йăли-йĕркине малалла та чыслăн пурнăçласа пырассине тивĕçтерес тесе аслă вĕрентекенсем хăйсен темрен паха опытне çамрăксене парса хăварма пултарасси пирки иккĕленместĕп, потребительство рынокĕ малашне те çĕнĕ йышши мелсемпе усă курса пурне те туллин тивĕçтермелле ĕçлессе шанатăп.

Потребительсен кооперацийĕн мĕн пур ĕçченне, пайçăсене, отрасль ветеранĕсене уяв ячĕпе саламлатăп. Çирĕп сывлăх, коопераци юхăмне кирлĕ пек аталантарма тата ялти пурнăç пахалăхне ӳстерме пулăшакан плансене ăнăçлăн пурнăçлама, телей тата ырлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. ИГНАТЬЕВ.**

# Вырăнсенче пурнăç интереслĕ

Ял тăрăхĕсенче

**Пурнăç пĕр вырăнта тăмасть, шав малаллах каять. Ку вăл çапла пулмалла та. Епле пулсан та кирек кам та малашлăха пăхать, ыранхи куна шанать, çĕнĕ ĕмĕт-тĕллев çуратать, вĕсем патне талпăнать. Ял тăрăхĕсенче те çаплах. Пĕрлехи вăйпа тĕрлĕ ĕçсем пурнăçланаççĕ, мероприятисем иртеççĕ. Чăрăнса тăрарха вĕсенчен хăшĕсем çинче.**

**Уйкас Янасал.** Районти Акатуй уявĕ кăçал пултаруллă та хастар çĕр ĕçченĕсене Лантăш вăрманĕн уçланкине 60-мĕш хут пуçтарчĕ. Чи маттуррисем вара парнесене тивĕçрĕç. Вĕсем хушшинче вырăнти Ильич яч. хис. хуçалăх механизаторĕн Виталий Петровăн ячĕ те пур. Ăна та уяв сцени çине чĕнсех чысланă.

Уявра «чăваш урамĕнче» пулса курма интереслĕ пулнă. Кашни ял тăрăхĕ хăйĕн «кил-çуртне» хатĕрленĕ, хăнасене хăйсен çимĕçĕпе сăйланă. Уйкас Янасалсем çемье пурнăçне сăнланă. Уйрăмах Сосновка ялĕнче пурăнакан И. Макаровăн тĕрри-эрешĕсем çынсене тыткăнланă. Ахальтен мар ĕнтĕ ку ял тăрăхĕн кил-çурчĕ «Чăвашсен кил-çурчĕ» конкурса хутшăнса 2-мĕш степень Диплома тата хаклă парнене тивĕçнĕ.

**Мăн Сĕнтĕр.** Кашни яшкĕрĕмшĕнех шкултан вĕренсе тухни палăрăмлă та пĕлтерĕшлĕ самант пулса тăрать. Кăçал 11-мĕш класран 29 яшпа хĕр вĕренсе тухнă. Вĕсенчен 2-шĕ шкула ылтăн, 3-шĕ кĕмĕл медальпе вĕçленĕ.

Шкулпа сыв пуллашасси пуриншĕн те пĕр савăнăçлă, тепĕр енчен тата кăшт хурлăхлă самант. Шкултан вĕренсе тухакансене район администрацийĕн вĕренӳ тата çамрăксен политикин пайĕн пуçлăхĕ З. Дипломатова, шкул директорĕ К. Спиридонов саламланă, пурнăçăн анлă çулĕ çинче ăнăçусем суннă.

**Ильинка.** Июнĕн 26 – 27-мĕшĕсенче Ильинка шкулĕн бази çинче шкулти «Волжанка» лагерьте канакансемпе тата Шупашкарти механикăпа технологи техникумĕн студенчĕсемпе пĕрле республикăри «Çамрăк сăн ӳкерекенĕн çуллахи шкулĕ» семинар иртнĕ. Занятисене техникум преподавателĕ А. Абрамов тата шкулти истори учителĕ И. Каргин ирттернĕ.

Семинар усăллă иртнĕ. Студентсем сăн ӳкерчĕксем нумай тунă, ачасем те хăйсемшĕн усăллине илме пултарнă.

* * *

Нумаях пулмасть Ильинкăра Атăл хĕрри Çармăс Республикинчи Горномарийски районĕнчи Кузнецовкăри, хамăр районти Мăн Сĕнтĕрти тата Ильинкăри шкулсенче вĕренекенсене пуçтарнă. Шкул ачисем усă шывра çынсене çăлассипе регионсем хушшинчи нумай енлĕ команда кĕрешĕвĕнче вăй виçнĕ. Сумлă хăнасем, представительсем те чылай пулнă.

Ильинкăсен командинче Андрей Морозов, Стас Портнов, Кирилл Сеньков, Дарья Щеглова, Светлана Яртеева тата Снежана Пигенешева ăмăртнă. Ăмăртура вĕсем тивĕçлипех пĕрремĕш вырăн çĕнсе илме пултарнă. Мăн Сĕнтĕрсемпе çармăссен командисем хыççăнхи вырăнсене пайланă.

**Оринин.** Орининсем йăлана кĕнĕ Çветуй Троица кунне уявланă. Кунти чиркӳре ирхине кĕлĕ иртнĕ. Унтан уява та чиркӳ умĕнчех йĕркеленĕ. Уява Иннокентий атте, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ В. Никитин, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ, ветерансен вырăнти канашĕн председателĕ В. Вязов, Перекет банкĕн уйрăмĕн хушма офисĕн заведующийĕ Ю. Иванов, «Оринино» хуçалăх ертӳçи Ю. Шишокин, Оринин шкулĕн директорĕ В. Иванов, чиркĕве юсакан инвесторсем хутшăннă. Лапкасри М. Игнатьев предприниматель ачасем валли батут туса панă. Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсен магазинĕсем, предпринимательсем хăйсен продукцине сĕннĕ.

Концерт программи пуян пулнă. Халăх пултарулăхĕн Орининти «Шуракăш», «Оринен», Мулкачкассинчи «Пучах» коллективсем уява пухăннисене ташă-юрă парнеленĕ.

**Юнкă.** Юнкă шкулĕн стадионĕнче авиамодельсен ăмăртăвĕнче «Сывлăшри çапăçу» енĕпе Чăваш Енре мала тухассишĕн ăмăртусем иртнĕ. Ăмăртусене тĕп судья – ЧР авиамодель спорчĕн федераци президенчĕ Н. Захаров хакланă.

Ăмăртусен пĕтĕмĕшле итогĕсем тăрăх Муркашсем 9-мĕш спартакиада шучĕпе 1-мĕш вырăна тивĕçнĕ, кубок çĕнсе илнĕ.

Июлĕн 9 – 16-мĕшĕсенче Ульяновскра Раççей ăмăртăвĕсем иртеççĕ. Унта Юнкă шкулĕнчен Л. Романовпа А. Тепеев хăйсен пултарулăхне кăтартĕç.

**Ярапайкасси.** Июнĕн 24-мĕшĕнче пĕтĕм халăхпа Республика кунне анлăн уявларăмăр. Çав кун Шупашкарта Чăваш патшалăх операпа балет театрĕ умĕнчи сцена çинче Чăваш Енри наципе культура пĕрлешĕвĕсен XII «Туслăх кăшăлĕ» фестивалĕ иртнĕ. Фестивале республикăран 11 коллектив, çавăн пекех халăх коллективĕсем Узбекистанран, Мордовирен, Çармăс Республикинчен, Пушкăрт Республикинчен, Ульяновск облаçĕнчен хутшăннă. Пĕтĕмĕшле 350 çын ытла.

Фестивале Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи «Екрем» халăх фольклор ансамблĕ те хутшăнма тивĕçнĕ. Ярапайкассисем ăсталăхшăн, наци культурине пропагандăланăшăн тата халăхсем хушшинчи туслăха çирĕплетме тӳпе хывнăшăн уявран дипломпа таврăннă.

**Ял тăрăхĕсен сайчĕсенчи материалсемпе усă курса В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

Саламлатпăр



Хаклă та юратнă çыннăмăра – юратнă мăшăра, кăмăллă аннене, çепĕç кукамая – Юнкăпуç ялĕнче пурăнакан **Людмила Николаевна АПРОСЬКИНĂНА** çуралнă кунĕ ячĕпе саламлатпăр. Вăрăм кун-çул, çирĕп сывлăх, иксĕлми телей сунатпăр. Мăшăрĕпе килĕштерсе, юратса, ачисемпе, мăнукĕсемпе савăнса пурăнма сунатпăр.

Эпир санпа мухтанатпăр, эпир санпа савăнатпăр, нумай-нумай пурăнма эпир сана сунатпăр. Пиршĕн эсĕ кил ăшши, пиршĕн эсĕ чун савни. Нихăçан та ан чирле.

**Салампа: мăшăрĕ, юратнă ачисем, мăнукĕ, хунямăшĕ, тăванĕсем.**



Хисеплĕрен те хисеплĕ, ылтăн-кĕмĕлтен те хаклăрах, хĕвелтен те ăшăрах, çĕр çинчи чи юратнă çыннăмăра – Сатракасси ялĕнче пурăнакан **Зинаида Степановна КОНУЗИНĂНА** 76 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, тапса тăракан çăл куç пек иксĕлми вăйхал, тумхахсăр кун-çул, телей сунатпăр. Санăн ялан хавас кăмăл пултăр, чун ăшши нихăçан та ан иксĕлтĕр. Эс пуриншĕн Турра тав тумашкăн сăмах та çитмест. Ырă кăмăлушăн, йывăр вăхăтра сан çунаттусем айĕнче канлĕх те ăнланулăх тупма пулăшнăшăн, пирĕншĕн тăрăшнăшăн çĕре çити тайма пуç. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр.

Ватлăхра та ывăнмасăр,
Ир те, каç та лăш курмасăр,
Пире телей пиллетĕн,
Хĕвел пулса çӳретĕн.

**Саламлаканĕсем: 3 хĕрĕпе кĕрӳшĕсем, 7 мăнукĕ, 3 кĕçĕн мăнукĕ, кӳршисем, Харьковсен çемйи, мĕн пур тăванĕ.**

Юратнă аннене, асаннене, хунямана – Москакасси ялĕнче пурăнакан **Анна Семеновна ФИЛИМОНОВĂНА** 85 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Телей, çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: ачисем, кинĕ, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем.**



Поздравляем **Алину Геннадьевну НЕСТЕРОВУ** с 35-летием! И от всей души желаем:

Бодрости, успехов трудовых,
Всех благ земных и неземных,
Чтоб сердце биться не устало,
Чтоб сил всегда на все хватало.
Чтоб радость спутницей была,
Чтоб жизнь была прекрасна и светла.

**С поздравлением: бабушка, мама, папа, муж, дети, семьи Евстафьевых, Сергеевых, Моисеевых и родные.**

Республикăра

## Паттăр ентешĕмĕр асрах

Вăхăт питĕ хăвăрт иртет. Пирĕн ентеш – икĕ хут Совет Союзĕн Геройĕ, СССР космонавт летчикĕ Андриян Николаев çĕре кĕнĕренпе июлĕн 3-мĕшĕнче 9 çул çитрĕ.

Ентешĕмĕре асăнса Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăл ялĕнче митинг иртнĕ. Унта Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов, культура, национальноç тата архив ĕçĕсен министрĕ Вадим Ефимов, республика Патшалăх Канашĕн депутачĕ – Олимп вăййисен чемпионки Елена Николаева, Сĕнтĕрвăрри районĕн ертӳçисем хутшăннă.«Андриян Николаев ятне космоса тĕпчессин историйĕнче ылтăн сас паллисемпе çырса хунă», – палăртнă хăйĕн сăмахĕнче республика Пуçлăхĕ. Митинга хутшăннисем Андриян Николаевăн вил тăпри çине чечексем хунă, космонавтăн ачалăхĕ иртнĕ музей çуртĕнче пулса курнă, космонавт ячĕллĕ кунти вăтам шкулăн, информаципе культура центрĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнă.

Асăну кунне халалласа ачасен Муркашри тĕп библиотекинче те мероприятисем иртнĕ. Ачасемпе калаçусем йĕркеленĕ, асăну сехечĕ ирттернĕ, кĕнекесен «Андриян Николаевăн çăлтăр çулĕ» выставкине хатĕрленĕ.

Патшалăх пулăшăвĕ

# Пултаруллисене тата пуçаруллисене – грант



Раççей Федераци шайĕнче фермер ĕçĕнче пуçарулăх кăтартакансем валли грант тата пĕр хутчен паракан пулăшу уйăрас 2012 – 2014 çулсенчи программăсем (çемье ферми аталантаракансем тата хресчен (фермер) ĕçне пуçаракансем) иртнĕ çул вăй илчĕç. Федераци программисемпе ĕçлессинче Чăваш Республики, ытти регионсемпе танлаштарсан, уйрăмах ăнăçлă та пуçаруллă пулнине, ăна ыттисенчен маларах вăя кĕртнине палăртнă.

Асăннă программăсене хресчен (фермер) хуçалăхĕсене пулăшас, хушма хуçалăх тытакансене çак юхăма кĕртес, çапла майпа ял çыннине курăмлă пулăшу кӳрес тĕллевпе йĕркеленĕ. Ял хуçалăх продукцине туса илессинче пĕчĕк формăллă хуçалăхсен тӳпи вара пысăк.

Фермерсене пулăшасси çӳлерех асăннă икĕ категорирен тăрать. Пулăшу кӳрес тĕлĕшри виçĕ çуллăх йĕркеленĕ программăн пĕрремĕш категорине вăя кĕртме республика шайĕнче 664,9 миллион тенкĕ пăхса хунă. Ку – çемье фермисене аталантарасси. Çак ĕçре тăкакланнă хакăн 60 проценчĕ таран патшалăх саплаштарать. Иртнĕ çул республикăра ку тĕлĕшпе виçĕ фермер валли 28, 94 миллион тенкĕ уйăрнă.

Иккĕмĕш пусăм – фермер ĕçне пуçăнасси. Асăннă категорие программа тапхăрĕн шайĕнче туллин ĕçлеме 215,0 миллион тенкĕ уйăрнă. Кăçал 46 фермер валли 47 миллион тенкĕ тăкаклама палăртнă. Иртнĕ çул ку енĕпе 51 фермер 54 миллион тенкĕлĕх пулăшупа усă курнă.

Çапла вара Чăваш Республикин ял хуçалăх министерствин ятарлă комиссийĕ федераци программисемпе пĕтĕмпе республикăра 94 проекта ăнăçлисем шутне кĕртнĕ. Пирĕн районтан 8 ĕç тăратнă. Грант тивĕçнисенчен пĕри – Дмитрий Смирнов **(сăн ӳкерчĕкре)**. Вăл республикăра сайра-хутра тĕл пулакан паха тирлĕ чĕр чун – шиншилла – ĕрчетме тĕллев тытнă. Апла пулсан ырă пуçарăва туллин вăя кĕртме ăна ăнăçу сунар.

Çавăн пекех грант тивĕçнисен шутĕнче: Алексей Петров тата Алина Афанасьева. Вĕсен ĕçĕхĕлĕпе каярах паллаштарăпăр.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Асăрханулăх пирки – тепĕр хут

Шыва кĕмелли тапхăр

Шăрăх çу кунĕсенче юхан шыв, пĕве, плотина хĕрринче канма, таса шыва кĕрсе киленме питех те аван. Çапах та тимлĕх, асăрханулăх пирки самантлăха та манма кирлĕ мар. Ку енĕпе специалистсем асăрхаттарсах тăраççĕ пулин те, çу кунĕсем инкек-синкексĕр иртменни питĕ пăшăрхантарать.

Район администрацийĕн ятарлă программăсен секторĕнчен пĕлтернĕ тăрăх кăçал та кун пек синкер пирĕн районтан пăрăнса иртмерĕ. Иртнĕ эрнере Шупашкарта пурăнакан 50 çулхи Владимир Антонов Исетерккĕ пĕвинче шыва кĕнĕ чухне путса вилнĕ.

Специалистсен сĕнĕвĕсене уяманни хакла ларать. Кайран чавса çывăх та çыртма çук тени тĕрĕсех. Чи малтанах шыва кĕрекенĕн урă пулмалла, ӳсĕр пуçпа шыв хĕрне пыма та кирлĕ мар. Ачасене те асăрхаттарсах тăрас пулать. Аслисемсĕр шыва кĕме ан çӳреччĕр. Уйрăмах пĕлнĕпĕлмен вырăнсенче шыва ан кĕрĕр.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Тăван тавралăх

# Экологи субботникĕ

Иртнĕ уйăх вĕçĕнче чылай çĕрте вăйлă çил-тăвăл алхасрĕ. Вăл шутра пире те, Ятман ялĕнче пурăнакансене, çут çанталăк пулăмĕ аякра хăвармарĕ, уйрăмах пысăк пĕве тавра хăрушă ӳкерчĕк пулса юлчĕ. Çавна май урамсенче, çырмасенче – пур çĕрте те йывăç турачĕсем хуçалахуçăла ӳкрĕç. Пĕр енчен – илемсĕр, тепĕр енчен – хамăра мелсĕр. Ку кĕтес вара пурне те илĕртет – шыва кĕрекенсене, пулă тытакансене. Çапла вара эпир пĕр шухăшлă пулса экологи субботникне тухрăмăр. Çак ĕçре манăн уйрăмах тăрăшулăхпа палăрнисене ырăпа асăнас килет: Р. Григорьева, Г. Егорова, Ю. Егоров, В. Кузьмин, В. Смородинов, Д. Кириллов тата ыттисем те. Пĕтĕмĕшле илсен вара – пурте маттур. Тепĕр тесен çакăн пек ĕçсене çут çанталăк пулăмĕсене пăхмасăрах йĕркелемелле.

**В. ИВАНОВА.**

Ятман ялĕ.

Çуллахи кану

# Июльте – иккĕмĕш смена

Районта ачасен сывлăхне çирĕплетме тата вĕсен канăвне йĕркелеме кăçал пурĕ 7 миллион та 340 пин тенкĕ уйăрнă. Вĕсенчен 3 миллион та 345 пин те 700 тенкĕ – шкулсем çумĕнчи лагерьсен ĕçне йĕркелеме, хула тулашĕнчи лагерьсене сывлăха çирĕплетме тата канма кайма – 3 миллион та 417 пин те 600 тенкĕ.

Лагерьсенчен ытларахăшĕ июнь уйăхĕнче ĕçлерĕ. Район администрацийĕн вĕрентӳпе çамрăксен политикин пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх пĕрремĕш сменăри сывлăха çирĕплетмелли лагерьсене пурĕ 972 ача çӳренĕ, профиль лагерĕсене – 1071 ача. Нумай шкулта пур ачана та çак канупа тивĕçтернĕ. Профиль лагерĕсенче ытларах экологи, спорт тата ăс-тăн аталанăвĕ енĕсене суйласа илнĕ. Кунне икĕ хутчен вĕри апатланупа тивĕçтерме лагере çӳрекен кашни ача валли кунне 69-шер тенкĕ уйăрнă.

Шкулсем çумĕнчи сывлăха çирĕплетмелли, профиль лагерĕсен иккĕмĕш смени июльте пуçланчĕ. Сывлăха çирĕплетмелли лагерьсенче пĕр смена 21 куна тăсăлать, профиль лагерĕсенче – 10 куна. Иккĕмĕш сменăра сывлăха çирĕплетмелли лагерьсене Чуманкассинчи вăтам (30 ача) тата Шетмĕпуçĕнчи тĕп (40 ача) шкулсенче йĕркеленĕ, профиль лагерĕсене – Муркашри (70 ача), Чуманкассинчи (40 ача), Юнкăри (40 ача) вăтам тата Шетмĕпуçĕнчи тĕп (20 ача) шкулсенче.

Сывлăха çирĕплетмелли лагерьсене ытларах пуçламăш классенче вĕренекенсене явăçтарнă пулсан, профиль лагерĕсене вăтам сыпăкри ачасем çӳреççĕ. Лагерьсене чи малтанах нумай ачаллă, сахал тупăшлă, йывăр лару-тăруллă çемьесенче ӳсекенсене явăçтарасси шкулсемшĕн тахçанах хăйне май йĕрке пулса тăнă ĕнтĕ. Çавăнпа та лагерьсем ĕçленин усси пысăк пулнине кашни шкултах палăртаççĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Тăванлăх çыхăнăвĕсем пĕрлештереççĕ

Пушкăрт чăвашĕсем патĕнче

Кăçалхи 2013 çула Тавралăха хӳтĕлемелли çулталăк тесе палăртнă. Çакă пире, Çĕр чăмăрĕ çинче пурăнакансене, тавралăха куллен упрама кирли çинчен татах тепĕр хут аса илтерет.

Эпир, Орининсем, нумаях пулмасть инçетри Пушкăртра пурăнакан ентешсем патĕнчен, чăвашсен паллă çыравçисем Константин Ивановпа Ухсай Яккăвĕ çуралса ӳснĕ вырăнсенчен, Слакпуçĕнчен ĕçлĕ хăнара пулса таврăнтăмăр. Çак ĕçлĕ те канулла çул çӳрев пирĕншĕн çав тери усăллă та интереслĕ пулчĕ, Пушкăртра хăнара пулнă кунсем ветерансен «Оринен» халăх хорне çӳрекенсен, пирĕнпе пĕрле пынă «Шуракăш» юрăпа ташă халăх ансамблĕн ачасен ташă ушкăнĕнчи 11 ачан асĕнче яланлăхах юлĕç. Аслисенчен ытларах вара Орининти вăтам шкула çӳрекен 7 – 8-мĕш классен вĕренекенĕсемшĕн аякри ентешсем патĕнче савăнмалли те, тĕлĕнмелли те, мухтанмалли те нумай пулчĕ. Телепей районне кĕрекен Слакпуç, Силпи (ялĕ пĕтнĕ пулин те), Канаш, Краснояр, Чубукаран тата ытти ялсенче пулса Пушкăртра пурăнакан чăвашсен пурнăçĕпе, вĕсен ĕçĕхĕлĕпе паллашса çӳрерĕмĕр.

Слакпуç ялне пырса кĕнĕ çĕрте тĕп вырăнта анлă стелло çине пысăккăн «Ытарайми тăван чĕлхе кунта янрать татах илемлĕн» тесе çырса хунă. Пелепей районне пырса кĕнĕ çĕрте вара вырăсла, пушкăртла «Белебей – земля поющих родников» тесе çырни пур. Чăнах та аякра пурăнакан чăвашсем виçĕ ĕмĕр каяллах ахальтен мар ĕнтĕ Пушкăрт çĕрĕ çинче пурăнма тĕпленнĕ.

Слакпуç ялĕ 1903 çулта пуçланса кайни паллă. Ку ялта 4 ăратăран 200 ытла килте 570 чăваш, тепĕр 200 ытла пушкăрт, вырăс, украинец пурăнать. 1960-мĕш çулсенче Слакпуç ялĕнче 1-мĕш шкул уçăлнă. Шкулĕ 190 ача валли пулсан, 98 ача вĕренет. Ачасем 1-мĕш класран тытăнсах 4 – 5 чĕлхепе (вырăсла, чăвашла, пушкăртла, украинла тата акăлчанла) вулама-çырма хăнăхаççĕ. Шкулпа юнашар 4 – 5 гектар çинче тĕрлĕ чечек, шкул столовăйĕ валли пахча çимĕç, çĕр улми çитĕнтереççĕ, ашшĕамăшĕ килĕшнипе ачасене мĕн пĕчĕкренех ĕçлеме, пĕрпĕрне хисеплеме вĕрентеççĕ.

Çул çинче эпир пĕр майлă кăна 800 çухрăма яхăн кайрăмăр. Çул тăршшĕпе пире çĕрĕпех тулли уйăх çул кăтартса пычĕ. Ирхине хĕвелпе пĕрле Тутарстанран тухса Пушкăрт çĕрĕ çине кĕтĕмĕр. Анлă-анлă уйсем, сăртлă вырăнсем тата пысăк вăрмансем пире мăнаçлăн кĕтсе илчĕç. Уйĕсем тип-тикĕс. Ирхи 6 – 7 сехет çеç пулин те, хирсенче çĕнĕ те хăватлă ял хуçалăх техники ĕçлетчĕ. Çĕрĕсем вара вĕсем патĕнче хура та чуллă. Çанталăкĕ Пушкăртра пирĕнни майлах, анчах та вĕсем патĕнче çуркунне пĕр çумăр та пулманран курăксем кĕскерехчĕ, çулçăсем те сарăлсах çитейменччĕ. Анчах та улма-çырла йывăççисем çĕнĕ çынсем пекех шап-шурă тумпа кĕтсе илчĕç пире.

Пĕтĕм тавралăх пире хăйĕн илемĕпе, илемĕнчен ытла тасалăхĕпе, типтерлĕхĕпе савăнтарчĕ те, тĕлĕнтерчĕ те. Шапшурă хурăнсем сип-симĕс улăхçаранта мăнаçлăн та илемлĕн кашласа лараççĕ. Вĕсем патĕнче юман йывăççисем упранса юлайман иккен, хăрса пĕтнĕ, çапах та вăрманĕсем çав тери таса, пĕр хăрăк йывăç та, турат купи те кураймăн.

Çĕршер çухрăм çул çинче пултăмăр пулин те, пĕр çӳп-çап та, михĕ купи те, унта-кунта выртакан хут е пушă савăт таврашĕ те ниçта та кураймарăмăр. Пур çĕрте те типтерлĕхпе тирпейлĕх, тавралăх илемĕ, тĕлĕнмелле таса сывлăш чуна çĕклентерет. Çул çинче темиçе тăхтав та турăмăр. Вăрман е çул таврашĕнче пăрахса хăварнă çӳп-çап курмарăмăр, эпир те çула тухас умĕн кашнинчех хамăр чарăннă вырăна унти пекех тирпейлĕ хăварма тăрăшрăмăр.

Ялсем е Пелепей районĕнчи пысăк поселоксем витĕр тухнă чухне те – пур çĕрте те тирпейлĕх, илем хуçаланни курăнчĕ. Çакă пире савăнтарчĕ те, хумхантарчĕ те. Пушкăртра тавралăхĕ самай анлăрах та пысăкрах пулин те, унта пурăнакан çынсем тăван тавралăха упрама, хисеплеме пĕлни, унăн илемĕшĕн тăрăшни яр уççăн курăнчĕ. Вĕсен культури çӳллĕ шайра пулни чăн чăвашла тата пирĕн пек кирлĕ-кирлĕ мар сăмахсем хушмасăр калаçнинчен те, тавралăхпа тăван çут çанталăка хисеплесе юратнинчен те, тĕрлĕрен вак халăхсем пĕр çĕрте питĕ туслă пурăннинчен те, мĕн пĕчĕкренех чăваш ачисене чăвашла çеç мар, пĕрле пурăнакан ытти халăхсен чĕлхипе вуламаçырма тата калаçма вĕрентнинчен те, хăйсене питĕ сăпайлă тата лăпкă тытнинчен те курăнчĕ. Аякри Чăваш Республикинчен килнĕ ентешĕсене курсан та вĕсем (ачасем те, аслисем те е тата пушкăртсем те) пурте ăшă кăмăлпа хаваслансах пирĕнпе чăвашла çеç калаçрĕç, хăйсен чунри туйăмĕсене кăмăллăн палăртрĕç.

Эпир палăртнă вырăна ирирех çитрĕмĕр тата çав кунсем кану кунĕсене лекрĕç пулин те, вырăнти влаç органĕнче ĕçлекенсем пире çав тери тараватлăн, ăшшăн кĕтсе илчĕç. Автобус çинчен ансанах çап-çамрăк икĕ хĕр упраç пирĕнпе: «Аван-и?» – тесе кăмăллăн сăмах пуçларĕç. Ял тăрăхĕн администрацийĕн çурчĕ хăш тĕлте вырнаçнине те пире чăвашлах ăнлантарса-çитерсех ячĕç.

Музейсенче те, шкулта та, парксенче те – пур çĕрте те чăваш эрешĕсем куç тĕлне пулаççĕ. Пушкăртра пурăнакан аякри ентешсем хăйсем чăн чăваш пулнипе ытти халăхсем хушшинче мăнаçланни сисĕнет. Пирĕн ентешсем чăваш халăхĕн ырă йăли-йĕркисене, ĕçченлĕхпе сăпайлăха хаклани, ачасене мĕн пĕчĕкренех чăваш халăхĕ мăнаçлă та ĕçчен, чунĕпе таса та ырă кăмăллă пулни çинчен вĕрентсе воспитани парса ӳстерни кашни утăмрах палăрать.

Пур енчен те усăллă пулчĕ пулĕ тетĕп çак çул çӳрев. Аслисенчен ытларах пирĕнпе пĕрле пулнă шкул ачисем эпир паянхи пурнăçра туса çитереймен кăлтăксем пирки ăнланчĕç пулĕ.

Аякра, хăнара тем пек лайăх пулсан та, тăван тавралăхах кашниншĕнех хаклăрах. Кулленхи çитменлĕхсем, хамăрăн япăх енсем куç умне тухса тăчĕç. Эпир, Чăваш Республикинче пурăнакан чăвашсем, хамăрăн несĕлсен чĕлхине упрама пĕлменни, хамăрăн ачасене, мăнуксене чăн чăвашла калаçма та, вулама-çырма та вĕрентейменнишĕн те, тавралăх, çут çанталăк илемне упрама пĕлменнишĕн те мана хамăн чунри совеç умĕнче питĕ намăс пулчĕ. Эпир, аслисем, хамăр ачасене те, мăнуксене те çав аякри ентешсем пек мĕн пĕчĕкрен чăвашлăха хаклама вĕрентменнишĕн хамăр çеç явапли, айăпли куç умĕнчех.

Мĕншĕн-ха пирĕн ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен çулсеренех ял таврашĕсене тирпей-илем кĕртме сахал мар вăхăт та, укçа-тенкĕ те тăкаклама тивет? Тен çав укçа-тенкĕпе ытларах ырă енпе палăракан уйрăм хуçалăхсене, çемьесене хавхалантарма усă курмалла? Çут çанталăка вараласа пурăнакансене, автоçулсем хĕррипе çӳп-çап миххисем пушатса хăваракансене куракан кашни çыннăн вĕсене асăрхаттармалла е вĕсене пысăкрах штраф памалла (çав штраф укçисемех тирпей-илем тăвассинче пулăшу кӳччĕр).

Юлашкинчен манăн çакна каласа хăварас килет. Пуринчен ответлăрах контролер вăл – çыннăн совеçĕ, культура шайĕ. Константин Иванов «Нарспи» поэмăра каланă пекех:

«Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен,
Çĕрсем çинче, шыв çинче
Хуçа пулса вăл тăрать».

Çав тери вăйлă та чăн сăмахсем. Мĕнле хуçа пуласси вара хамăртан, кашни çынран çеç ытларах килет. Упрасчĕ пирĕн, кашни çыннăн хамăра тăрантаракан çут çанталăка. Кăçалхи паллă çул вара ăна татах та ытларах çине тăрса упрасчĕ.

**Елена НИКИТИНА,**
**«Оринен» халăх хорĕнче савăнсах юрлакан тата Пушкăрт чăвашĕсем патĕнчен ăшă кăмăлпа таврăннă çул çӳревçĕ.**

# Килĕшӳре – çемье тĕрекĕ, пуласлăхĕ

***Июлĕн 8-мĕшĕнче Раççейре пуранакансем Çемье, юрату тата шанчăклăх кунне уявлаççĕ.***

**Çак уяв сăваплă Петĕрпе Феврони ячĕсемпе çыхăннă, вĕсен юратăвĕпе тата шанчăклăхĕпе.**

**Петĕр княç Муром престолне 1203 çулта ларнă. Унччен вара вăл питĕ вăйлă чирпе чирленĕ пулнă. Ăна никам та сиплеме пултарайман. Тĕлĕкре княç çак чиртен ăна хресчен хĕрĕ Феврони сиплеме пултарнине курать.**

**Хĕр тĕне çирĕп тытса пурăннăшăн, унăн ырăлăхĕшĕн тата пурнăçри ăслăлăхĕшĕн княç ăна юратса пăрахать. Хăйне сипленĕ хыççăн качча илме шантарать. Çапла Феврони княçе сипленĕ хыççăн унăн мăшăрĕ пулса тăрать. Пурнăçри чылай йывăрлăх витĕр вĕсем хăйсен юратăвне çухатмасăр тухаççĕ. Таса пурнăçпа пурăнса ырă кăмăллă пулнипе чапа тухаççĕ.**

**1228- çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче вĕсем пĕр сехетрех тата пĕр кун вилнĕ. Ун умĕн иккĕшĕ те Давид тата Ефросиния ятсем йышăнса манаха тухнă пулнă.**



Муркаш ял тăрăхĕнчи Шаптакра пурăнакан Александра Ивановнăпа Виталий Васильевич Никитинсем çемье çавăрнăранпа 53 çул ĕнтĕ. «Пĕрлешнĕ чух пĕрле пурăнатпăр тесе тупа тунă, çак сăмахсене ăса та, ăша та хывнă. Пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнсан çемьен тĕрекĕ те, пуласлăхĕ те пур», – çемьере чи пĕлтерĕшли мĕнне ыйтсан çапла палăртаççĕ вĕсем. Пĕр-пĕрне ăнланса, килĕштерсе пурăннăран ĕнтĕ Никитинсем паян тăватă ачипе (шел пулин те, ывăлĕ çĕре кĕнĕ), тăхăр мăнукĕпе савăнма пултараççĕ.

Александра Ивановнăпа Виталий Васильевич ĕмĕр тăршшĕпех колхозра вăй хунă. Ĕçе яланах тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлама хăнăхнă мăшăр. Çавăнпах Виталий Васильевич Хĕрлĕ ялав орденне те тивĕçнĕ, халăх хуçалăхне аталантарассинче тунă ӳсĕмсемшĕн ВДНХ кĕмĕл медалĕпе те наградăланă ăна, унăн тăрăшулăхне Чăваш АССР Аслă Канашĕн президиумĕн Грамоти те çирĕплетет. Александра Ивановна «Ĕç ветеранĕ» медале 1988 çулта тивĕçнĕ.

Çак ĕçчен те туслă çемье Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕ умĕн тепĕр пысăк наградăна тивĕçрĕ: Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. Игнатьев Никитинсене «Юратупа шанчăклăхшăн» орден парса чысларĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**
**В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Хисеплĕ ентешсем!

**Сире пурне те Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕ ячĕпе саламлатăп.**

**Пирĕн çĕр-шывра çемье ыйтăвне тĕпе хураççĕ, унăн пĕлтерĕшне пысăка хурса хаклаççĕ. Юлашки çулсенче çемьесене пулăшас тесе патшалăх шайĕнче туса ирттерекен ĕçсем те çакна çирĕплетсе параççĕ. Ку уява туса хуни те çакăн çинченех калать.**

**Çемье, тăван кил ăшши пире ĕмĕр тăршшĕпех вăй-хăват парса тăрать. Кунтах ача пур енлĕн аталанса ӳсет, ырăпа усала уйăрма хăнăхать, ырă ĕçсем тума, чăн-чăн çын пулса ӳсет. Çавăнпа та ашшĕ-амăшĕ ачисем туслă çемьере çитĕнччĕр, вĕсем тĕрĕс воспитани илччĕр тесе тăрăшнине нимĕн те çитмест. Эсир пĕр-пĕринпе ырă чунлă пулнине, пĕр-пĕрне шаннине, пĕрле канашласа йывăрлăхсене çĕнтерме çăмăлраххине ывăл-хĕрĕрсем курса-туйса ӳсеççĕ, хăйсем те кайран сирĕн пекех пулма тăрăшаççĕ. Çемьери юратупа килĕшӳ вĕсене пурнăç çулĕпе тĕрĕс утма пулăшаççĕ. Кунта Павел апостол каланине илсе кăтартни вырăнлă пулĕ: юратакан çын чăтăмлă пулать, усал ĕç тумасть, ăмсанмасть, тĕрĕс марлăха курса савăнмасть, каçарать, шанать, ĕненет, çынсене ырă сунать. Асрах тытасчĕ çакна.**

**Çак уява халалланă Петрпа Феврония Муромскисем пек ĕмĕр тăршшĕпех таса та ырă чунлă пулмалла, пĕр-пĕрне чĕререн парăнса, ăнланса, пулăшса, чăн-чăн таса юратупа пурăнмалла пултăрччĕ сирĕн. Сывлăхăр çирĕп, кун-çулăр вăрăм пултăр. Телей сирĕнтен айккинелле ан пăрăнтăр. Чун ăшши пурин валли те çиттĕр.**

**В. АНАНЬЕВ,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ.**

Вăрçă ахрăмĕ

# «Малалла, «урра!» кăшкăрса...»

**(Малалли. Пуçл. 45 номерте.)**

1943 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕ. Ку вăхăта хытах шăнтрĕ, юр çурĕ, тĕтреллĕччĕ. Пирĕн дивизи иккĕмĕш хут Днепр урлă каçрĕ: пехотăпа пĕрле артиллери тата 7 танк. Эпир тӳрех Черкесск хулине кĕтĕмĕр, ирччен çур хула йышăнтăмăр та.

Пирĕн ротăна артиллери паркне йышăнма хушрĕç, хыççăн – унти вăтам шкула, чукун çул вокзалне... Артиллери паркне çапăçусемсĕрех йышăнтăмăр. Вăрман хĕрне çитрĕмĕр кăна – нимĕç пире миномет-пулемет çулăмĕпе картласа хучĕ. Эпĕ ун чух взвод командирĕн пулăшаканĕччĕ. Взводăн пĕр пайĕ вăрманта пытанчĕ, тепĕр пайĕ çывăхри окопсем патне чупса çитсе унта хӳтĕленме пулчĕ. Вăтам шкул çурчĕ патне пирĕнтен 200–250 метр. Командир мана взвода пĕр çĕреллерех пухма хушрĕ. Тăшман çулăмĕ айĕнче пулсан та çак хушăва пурнăçларăмах, анчах та кунта каçченех ларма тиврĕ. Вăхăтлăх йывăç пӳртсене вырнаçрăмăр, ирхи 2 сехет тĕлĕнче шкул çуртне илме тесе нимĕçсем çине тапăнма пуçларăмăр. Шкула йышăнса унти квартала нимĕçсен аллинчен кăларас тесе малалла тапăнса кайрăмăр.

Нимĕçсем пăшалтан пеместчĕç – пирĕн çине пĕрин хыççăн тепри граната вĕçетчĕ. Вăхăтлăх лăпланма тиврĕ, хыççăн пурпĕр нимĕçсене персе урамсем тăрăх кайрăмăр. Ирпе шăп. Нимĕçсем те сас памаççĕ. Кăнтăрла каялла шкул патне таврăнма приказ пулчĕ. Шкула урам урлă чупса каçнă чух пире пур çĕртен те пулеметпа пеме пуçларĕç: сывлăшран та, чукун çул вокзалĕ енчен те. Пирĕн взвод шкулта чарăнчĕ, тепĕр икĕ взвод – юнашар участоксенче. Взводăн çурри шкула шалтан таврашĕпех сыхларĕ, çав вăхăтра тепĕр çурри аяла котельнăйне канса илме анчĕ. Анчах та нумай вăхăт иртмерĕ – шкул тавра снарядсем çурăлма тытăнчĕç. Эпир котельнăйран чупса тухрăмăр – шкул патĕнче нимĕçсен танкĕ, ăна персе чарса лартнă. Нимĕçсем вăраххăн тапăнса пынă-мĕн. Пирĕн те малтанхи вырăнах – вăрман патне чакма тиврĕ. Пирĕн умра – шкул, хыçра – чукун çул айĕпе иртекен çул. Окопсем чавса çакăнта вăхăтлăх тĕплентĕмĕр.

Эпĕ «нушапа» окопсенчен аяккарах пăрăнтăм, пирус та чĕртсе ятăм. Тăруках пирĕн хыçра, кĕпер çывăхĕнче, нимĕç пулеметĕнчен пени илтĕнсе кайрĕ, винтовкăран та виçĕ хутчен печĕç. Юнашарах çынсем утнă сасă илтĕнчĕ. Пирĕн саперсем çул тĕрĕслеме тухнă пулĕ тесе шутларăм. Эпĕ тавралăха сăнама тăратнă салтаксем нимĕнле сас та памарĕç. Хамăрăн окопсем патне кайрăм – никам та çук. Окопра хăма айĕнче çывăракан пĕр салтака вăратрăм. «Ыттисем ăçта?» – вăл вара хул пуççине сиктерчĕ кăна. Сăнавçăсенчен ыйтрăм – вĕсем те нимĕн те пĕлмеççĕ, анчах та кунтан нимĕçсем еннелле пĕр взвод иртсе кайнине, вĕсем вырăсла калаçнине пĕлтерчĕç.

Хамăрăн взводран эпир тăваттăн юлтăмăр, ыттисем ăçтине пĕлместпĕр. Приказсăр ку вырăна хăварма юрамасть – персе пăрахаççĕ. Ыттисене шыраса шкул патне пытăмăр – никам та çук. Çак лару-тăрура пурпĕр рота командирĕн команда пунктне кайрăмăр. Пире унта кĕтнĕ иккен, построение хатĕрленнĕ.

Çакăнта тин эпир кĕпер çывăхĕнче мĕн пулса иртни пирки пĕлтĕмĕр. Пирĕн ротăна конвойпа икĕ салтака илсе килчĕç. Конвоирсенчен асли пирĕн ротнăйне çак икĕ разведчика дивизи командирĕ судсăрмĕнсĕрех кĕпер патĕнчех персе пăрахма приказ панине пĕлтерчĕ.

Разведка дивизийĕнчи çак икĕ салтак кĕпер çывăхĕнче пĕрремĕш номерлĕ сăнавçăсем пулнă. Çак кĕпер патне пирĕн тыл енчен нимĕçсен пĕр взвочĕ килнĕ. Çавсем пĕр-пĕрне пенине илтнĕ те иккен эпир маларах. Разведчиксем вара кĕпере нимĕçсем йышăннине пĕлтерме дивизи командирĕ патне чупнă. Инçе мар, 150–200 метрта пирĕн ротнăйăн команда пункчĕ вырнаçнă. Дивизи командирĕ лару-тăрăва тĕрĕс пĕлес тесе пирĕн ротнăй патне шăнкăравланă, ку вара кĕпер пирĕн алăрах пулнине çирĕплетнĕ. Çак икĕ разведчика хăйсен дивизийĕнчисемех персе пăрахрĕç.

**Пичете Н. ПУШКАРЕВА, Ярославка ял библиотекин библиотекарĕ хатĕрленĕ.**

**(Вĕçĕ пулать.)**

Çĕнĕлĕх

# Билет илме паспорт чикĕр

Чăваш Ен транспорт тата çул-йĕр хуçалăх министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса пассажирсем тата багаж турттарса çӳрессипе çĕнĕ правилăсем вăя кĕчĕç. Ку вăл çул çинчи хăрушсăрлăха тивĕçтерессипе Раççей транспорт министерстви хушу кăларнипе çыхăннă. Пĕлтерĕшлĕ самант – эсир Мускава, Санкт-Петербурга, Тутар Республикинчи хуласене, Самарăна тата Владимира каяс пулсан кассăра сирĕнтен паспорт кăтартма ыйтĕç. Тĕп документ çумра пулмасан çар билетне е ют çĕр-шыв паспортне кăтартсан та пулать. Улатăра, Канаша тата республикăн ытти хулисене кайнă чухне билет илме паспорт кирлĕ мар. Мĕншĕн тесен РФ транспорт министерстви пассажирсен паспорт даннăйĕсем кирлĕ тесе палăртнă регионсен шутне Чăваш Ене кĕртмен.

**Е. АЛЕКСАНДРОВА.**

# Вăрманçăсен слетĕнче

Çут çанталăка сыхламалла

Çак эрнере республикăра шкул вăрманçисен 27-мĕш слечĕ иртрĕ. Слета хутшăнакансене кăçал пирĕн районти Юнкă тăрăхĕ йышăнчĕ. Утă уйăхĕн 3-мĕшĕнче уçăлнă слета çамрăк вăрманçăсен командисем Вăрнар, Комсомольски, Вăрмар, Çĕмĕрле, Етĕрне районĕсенчен килсе çитрĕç.

Слета Чăваш Республикинчи çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министрĕн çумĕ Анатолий Яковлев хутшăнчĕ.

– Пысăк хăвăртлăхлă 21 ĕмĕре тĕрлĕ профессисем кирлĕ. Çапах Çĕр планетăна сывлăх тата илемлĕх пама вăрманçă ĕçĕ пĕлтерĕшлĕрех. Пĕрремĕш космонавт Юрий Гагарин хăйĕн эфирти ятне «Кедр» йышăнни те, чăвашсен улăпĕ Андриян Николаев космос уçлăхне çĕклениччен вăрманçă ĕçне алла илни те вăрман çын пурнăçĕнче тĕп вырăнта тăнине çирĕплетет. Эсир те хăвăр ĕмĕрте яланах вăрманпа туслă та çывăх пуласса шанатăп, ĕненетĕп, – терĕ Анатолий Петрович слета хутшăнакансене сăмах каланă май. Вăл çак ĕçре пуçаруллă ĕçлекен учительсене, ашшĕ-амăшне тав сăмахĕ каларĕ.

Слет ĕнер хăйĕн ĕçне вĕçлерĕ.

# Муркашран Елчĕке – ют хĕр патне

Пулни-иртни

1950–1965 çулсем... Мĕнле кĕтнĕ эпир çуллахи ярмăрккăсене! Питрав кун (июлĕн 12-мĕшĕ) – Чăваш Сурăмĕнче, Турă çӳле çĕкленнĕ кун (кĕçнерни кун) – Йӳçкассинче. Çав кунсенче ял кĕтĕвĕ те кăнтăрлаччен кăна çӳретчĕ. Ярмăрккăсенче машинăсем пулман, лашасем те сахал пулнă. Пĕтĕм халăх 10–15 çухрăмран çуранах пынă. Унта 1 çухрăм тăршшĕ ытла 2–3-шерĕн тăрса утнă. Хăвна килĕшекен хĕр е каччă пулсан юнашар тăрса утнă...

Çав çулсенче çамрăксене хулана кайма паспорт паман – ял хуçалăхĕнче ытларах ĕçлемелле. Тырă çурласемпе вырнă-çке-ха, ытти тĕрлĕ ĕç те нумай.

Хĕрпе каччă пĕрлешес пулсан яланах тенĕ пек çывăхри ялтисемпе пĕрлешнĕ. Туй тума 50–70 лав таран кайнă: хĕр илме çуллахи вăхăтра тăрантаслă капăр урапасемпе, хĕллехи вăхăтра – хыçлă сăрланă хура çунасемпе. Хальхи вăхăтра ялсенче çамрăксем питĕ сахал. Пĕрлешес пулсан та урăх районти чăвашсемпе, вырăстутарпа кăна мар, ют çĕр-шыв çыннисемпе те пĕрлешеççĕ.

Манăн хамăн та çывăх тăванăн ывăлĕн туйĕнче пулма тӳр килчĕ. Авланакан каччă патне унăн йăмăкĕпе пĕрле Елчĕкрен чипер хĕр килет. Вăл çак хĕре юратса пăрахать. Хĕрĕ те хирĕç пулмасть. Вара пирĕн Кольăпа Галя пĕрлешме килĕшеççĕ. Елчĕке хĕрĕн ашшĕпе амăшĕ патне кайса туй хăçан пулассине калаçса килеççĕ.

Çулĕ çывăх мар: Муркашран Елчĕке çитмелле. Туя туй пек тумалла: икĕ автобуспа тата ытти çăмăл машинăсемпе хĕр илме кайрăмăр. Елчĕке çитетпĕр – пире никам та кĕтсе илмест. Гальăна малтанхи каччи хулана илсе кайнă иккен. Мĕн тумалла?

Çав вăхăтра каччă патне пĕр палламан хĕр пырать, сăнĕпе Галя майлах, хитре. «Килĕшетĕр пулсан эпĕ качча пыратăп», – тет пирĕн кин пуласси Кольăна. Галя çак хĕре çапла тума сĕннĕ пулнă. «Туйпа килсен эсĕ Кольăна качча тухма килĕшетĕп тесе кала», – тенĕ.

Çак хĕре курсан пирĕн каччă хĕпĕртесе кайрĕ. Вара эпир Елчĕкрен хĕрпех, йĕркеллĕ хăналансах таврăнтăмăр. Çакăн пек мыскара курса килтĕмĕр.

**И. ЯКОВЛЕВ.**

Хурăнкасси ялĕ.

# Алăкран курсант шаккарĕ

**Пирĕн хăнара – çар училищинче вĕренекен**



Çулсем иртнине пăхмасăрах кашни килте асаттесемпе мăн асаттесен, аттесен Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинчи паттăрлăхне упраççĕ, паян çĕр-шыв хуралĕнче тăракансемпе мухтанаççĕ. Раççейре пурăнакан кашни çын – çар постĕнче тăрать-и вăл е мирлĕ ĕçре чунне парса тăрăшать – чăн малтанах Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçи. Пирĕн паянхи парăм вара – вырăс çарĕн мухтавлă енĕсене упраса хăварасси...

Çĕр-шыв историйĕпе ăна çыракансем пирки шухăшласа ларнă вăхăтра алăкран шаккарĕç. Алăк уçăлсан пӳлĕме курсант форми тăхăннă хам паллакан яш хăюллăн ура ярса пусрĕ. Çирĕппĕн алă парса сывлăх суннă хыççăн сывлăш-çар десанчĕн пулас офицерĕ çарти йĕркепе хăй çуллахи каникула килсе çитни пирки, хăçанччен тăван енре пуласси çинчен пĕлтерчĕ.

Паллаштарам. Ман умра – Рязаньти командирсем хатĕрлекен сывлăш-çар десант училищин курсанчĕ Владимир Белков. Оринин салинче 3 ачаллă çемьере çуралса ӳснĕ Володя ачаллах ашшĕсĕр юлнăскер амăшĕшĕн тĕп пулăшуçă пулса юлнă. Çакă ăна Раççей çарĕнче тивĕçлĕ çар службинче тăрассинчен те пăрăнса юлма паман. Çамрăклах пурнăçра çиччĕ виççе хак пама хăнăхни каччăна действительнăй çар служби хыççăн та пурнăçне салтак пурнăçĕпе çыхăнтарма тĕкĕ панă.

– Шкулта вĕреннĕ чухнех çирĕп салтак пуласси манăн ĕмĕтреччĕ. Çапла вара вăтам шкул хыççăн салтака кайма хатĕрленсе çар комиссариачĕ урлă ДОСААФра водителе вĕрентĕм. Çак специальноçпах Приморье тăрăхĕнчи Чернышевка салинче вырнаçнă автобатальонри авторотăра службăра тăтăм, – çарта тăнă кунсене аса илсе калаçрĕ В. Белков.

Вăл вăхăтра 19 çулхи каччăн питĕ тăван яла таврăнас килетчĕ. Акă служба вăхăчĕ иртрĕ те салтак Оринина таврăнчĕ. Пурнăç çине ача чухнех хуçалла пăхма вĕреннĕскер таврăнсан кăшт вăхăт иртсенех хăйне салтак пурнăçĕ каялла чĕннине ăнланса илет.

– Çĕнĕ шухăшсемпе çар комиссариатне пытăм. Çар училищине вĕренме кайма кăмăл пуррине пĕлтертĕм. Кунта мана пуласлăхпа паллаштарчĕç, ăçта каяссине суйласа илме ирĕк пачĕç. Çиччĕ виççе пăхнă хыççăн çар комиссариачĕн ĕçченĕсемпе Рязаньти командирсем хатĕрлекен сывлăш-çар десант училищине суйласа илтĕм. Паян çакăншăн пĕр ӳпкеленӳ те çук. Манăн çул вăл. Сисмерĕм те, пĕрремĕш курс хыçа юлчĕ. Вăтам шкул хыççăнах çар училищи суйлакансене ăмсанатăп çеç паян. Çавăнпа та аслă классенче вĕренекен маттур яшсене хăйсен малашлăхне çĕр-шыва сыхлас ĕçпе çыхăнтарма сĕнетĕп. Çĕр-шыв ертӳçисем те Раççей çарĕ тĕлĕшпе тимлĕх ытларах уйăрнине куратăр пулсан, эсир тунă йышăну тĕрĕс пулĕ, – терĕ ентеш амăшĕ лартнă чечексемпе киленнĕ хушăрах çамрăксене сĕнӳ парса.

Çĕр-шыва хӳтĕлес сумлă ĕçри йывăрлăхсемпе çухатусене тата çарти интереслĕ пурнăçа салтак пăтти çисе курнă çын çеç туллин уçса пама пултарайрать. Çак тĕрĕслĕхе Владимир Белков курсант сăмахĕсем те çирĕплетрĕç. Тăван çĕршыва юратасси хамăр юлташсемпе ентешсене хисеплеме-чыслама, атте-аннесен ячĕпе туллин мухтанма пĕлнинчен пуçланать те.

**А. ПЕТРОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Следстви комитетĕнчен**

# Çын пурлăхне куç хывнă

Июнĕн 23-мĕшĕнче 1978 çулта çуралнă арçын тĕлĕшпе айăплав йышăнăвĕ вăя кĕчĕ. Преступлени Катăкуйĕнче пулса иртнĕ. Ют çын пурлăхне куç хывнă арçын маларах палăртнă хуçалăхсене пынă. Алăксене çăрапа питĕрнĕ пулнă, вăл вĕсене пурне те çĕмĕрсе кĕнĕ. Çапла вара виçĕ хуçалăха сиен кӳнĕ. Кунта РФ УК 139 статьян 1 пайĕнчи йĕркене пăсса преступлени тунине çирĕплетекен факт çителĕклĕ.

**И. ФЕДОТОВ, аслă следователь.**

**Пушар хăрушсăрлăхĕшĕн тăрăшар**

***Шăрăх çу кунĕсем пуçланчĕç. Çут çанталăка сăнакансем асăрхаттарнă тăрăх ку вăл пуçламăшĕ кăна-ха. РФ Чрезвычайлă лару-тăру министерстви те вырăнсене çак хыпара ярса пачĕ. Апла пулсан çывăх вăхăтра асăрханулăх çине пурин те хушма тимлĕх уйăрма тивет. Ку асăрхаттару утă тапхăрĕпе тӳр килнĕрен çак ĕçе хутшăнакансен пушар хăрушсăрлăхне пăхăнассине тĕп вырăнта тытмалла. Çакна шута илсе эпир паян хаçат тĕпелне патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн аслă инспекторне К. ПОПОВА калаçăва чĕнтĕмĕр.***

**– Константин Геннадьевич, симĕс ĕç çи пуçланни пĕрремĕш кун мар ĕнтĕ. Ыранхи куна пăхса ĕçлекенсен хирĕсенче утă рулонĕсем те туллиех. Вĕсене фермăсем çывăхне турттарса утă капанĕсем туса лартни те – ял хуçалăхĕнчи паянхи кун чăнлăхĕ. Çак тапхăра район территорийĕнчи пушар тухаслăхпа еплерех хак пама пулать тата?**

– Калаçăва чĕннĕшĕн пысăк тав. Сирĕн çак ĕç те Муркаш енре пушар тухаслăха чакарассипе пысăк витĕмлине пытармастăп. Тĕрĕсех палăртрăр, районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе килти хушма хуçалăхсенче уяр кунсемпе усă курса çитес хĕл валли паха выльăх апачĕ хатĕрлессипе ĕçсем анлă сарăлчĕç. Ыранхи кун пирки шутлани лайăх, анчах çак тапхăрта пушар хăрушсăрлăхĕ çинчен самантлăха та манмасан пуласси татах та тулăхрах килесси никамшăн та вăрттăнлăх мар. Кунта симĕс ĕç çине хутшăнакансем пушар хăрушсăрлăх правилисене çирĕп пăхăнасси малти вырăнта тăрать. Çĕр ĕçченĕн çак ответлă тапхăрĕнче «хĕрлĕ автан» вăй илсе сиен кӳресрен кашниййĕнех асăрханмалла: хирте те, килте те, типĕтнĕ утăна упранă çĕрте те.

Пушар тухаслăх çинчен калаçас пулсан районта «хĕрлĕ автан» кӳрекен çухатăва юлашки çулсенче нумайăшĕ ăнланни курăнать. Пысăк калăпăшлă ĕçсене пурнăçлама тăрсан пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче, ял тăрăхĕсенче пушар хăрушсăрлăхне иккĕмĕш вырăна хăваракан çукки ырă шанчăк çуратать. Паянхи пĕтĕмĕшле ӳкерчĕк çавнашкал. Кăçал паянхи куна районта 23 пушар регистрацилерĕмĕр. Ку вăл иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 6 тĕслĕх нумайрах. Пушар хăрушсăрлăх правилисене пăснипе çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче Нискассинче икĕ килти хушма хуçалăха «хĕрлĕ автан» иленчĕ. Çĕртме уйăхĕн 16-мĕшĕнче Хорнуйĕнче пысăк пушар алхасрĕ. Тепĕр 5 кунтан Шетмĕпуçĕнчен килекен автоçул çинче вак чул тиенĕ автомашина çинче тухнă пушар выльăх апачĕ янтăланă çĕре юсавлă техникăна кăна явăçтармаллине тепĕр хут аса илтерчĕ.

**– Хăвăр сăмахăра ут çипе çыхăнтарсан мĕн çинче ытларах чарăнса тăма пултаратăр?**

– Умра ут çи – ял халăхĕ те, çĕр ĕç техники те ĕçе массăллă явăçнă тапхăр, ыранхи куна çиччĕ виççе ĕçлемелли вăхăт. Кунта пушар хăрушсăрлăхĕ малти вырăнта пулмалли пирки калама та кирлех мар ĕнтĕ, анчах... Тимлĕхе самантлăха çухатни вуншар тонна типĕтсе янтăланă утă-улăма кĕл тăвать, хаклă та паха техникăна юрăхсăра кăларать. Çынсем самантлăха тимлĕхе çухатнипе пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче те, уйрăм çынсен килĕсенче те утă хранилищисемпе сарайсем, капансем, ĕç тăвакан техника нумай çунса кĕлленет. Пушар сăлтавĕсемпе тĕпчев иртнерсен кашни тĕслĕхрех пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнманни е сĕмсĕр пăсни куç умне пулать.

**– Асăрхаттарусем çинче уйрăммăн чарăнса тăма пулать-ши тата? Вĕсем никамшăн та ытлашши пулмĕç тесе шутлатăп.**

– Тĕрĕс шутлатăр. Эсир ыйтнине шута илсе тата ял ĕçченĕн хальхи хĕрӳ ĕç çийĕ вут-кăвар алхаснипе ан тĕксĕмлентĕр тесен пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче çак ĕçсене кая хăвармасăр туса иртермелле:

1. Выльăх апачĕ упранакан вырăнсене, ГСМ склачĕсене, машинăпа трактор паркĕсене, витаминлă курăк çăнăхĕ хатĕрлекен агрегатсене тата хатĕр продукци ăçта упраннине пушар хăрушсăрлăх тĕлĕшпе йĕркеленĕ вырăнти комиссипе пăхса тухмалла. Çав вырăнсенче шыв, пушар сӳнтермелли пирвайхи хатĕрсем, çыхăну, пушар çинчен сасă парса пĕлтермелли устройствăсем пулмалла.

2. Выльăх апачĕ хатĕрлеме хутшăнакан ĕçченсене, механизаторсемпе водительсене ятарлă журналта алă пустарсах ĕç çинчи пушар хăрушсăрлăх правилисемпе паллаштармалла, вĕрентӳ ирттермелле.

3. Утă капанĕсем ларакан е утă рулонĕсем упранакан вырăнсене электричество линийĕсенчен 15 метртан, çул хĕрринчен 20 метртан, çуртсенчен 50 метртан кая мар вырнаçтармалла.

4. Утă çине хутшăнакан техникăна пушар сӳнтермелли пирвайхи хатĕрсемпе тата хĕм сӳнтермелли устройствăсемпе тивĕçтермелле.

**– Унчченхи çулсенче кашни пĕрлешӳллĕ хуçалăхра пушар машини тытни инкекпе кĕрешме пысăк вăйччĕ. Паян çак ĕçре пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Кун пирки мĕн калайратăр?**

– Улшăнусем чылай хуçалăх ведомствăлла пушар хуралĕ тытма пăрахнипе çыхăннă. «Пушар хăрушсăрлăхĕ çинчен» Федераци саккунĕ хăрушсăрлăхшăн тăрăшса маларах асăннă çак ансат правилăсене пурин те пурнăçламалли пирки калать. Унпа пĕрлех çак хĕрӳ вăхăтра ведомствăлла пушар хурал ĕçченĕсен службине специалистсем тăратса вăйлатмалла. Пушар сӳнтерме пăхнă техникăна çителĕклĕ бензинпа, кирлĕ чухлĕ шывпа тытмалла, юсавсăр пушар машинисене строя тăратассипе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

Пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнса вăхăтра тата çителĕклĕ хатĕрленĕ выльăх апачĕ çитес хĕл кунĕсенче те производствăна хавшатмасăр тытса пыма пулăшĕ. Пушар хăрушсăрлăхĕпе паян туса ирттернĕ ĕç çывхаракан вырмара та ытлашши пулмасса шанатăп.

**А. БЕЛОВ**
**калаçнă.**

**Аукцион**

**Извещение о проведении открытого аукциона**

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики (далее – организатор аукциона) приглашает принять участие в аукционе (далее – аукцион), открытом по составу участников и по форме подачи предложений о цене, на право заключения договоров аренды земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики.

**Основание:** постановление администрации Моргаушского района Чувашской Республики от 02.07.2013 г. № 713.

**Почтовый адрес, номер контактного телефона, адрес официального сайта организатора аукциона и комиссии по проведению конкурсов или аукционов:** 429530, с. Моргауши, ул. Мира, 6 телефон/факс (83541) 62-2-66, 62-5-99, e-mail: http://gov.cap.ru/main/asp?govid=71.

**Контактные лица:** Захаров И.Н., начальник отдела имущественных и земельных отношений, тел.: 62-2-66.

**Характеристика объектов аренды:**

**Лот №1** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:090602:61, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, д. Москакасы, ул. Зеленая, для строительства и обслуживания многоквартирного жилого дома, площадью 2090 кв.м.

**Ограничения (обременения) земельного участка:** не имеются.

Со сведениями о технических условиях подключения к сетям инженерно-технического обеспечения можно ознакомиться по вышеуказанному адресу.

Стоимость присоединения к сетям инженерно-технического обеспечения будет определена при оформлении договоров на оказание услуг на присоединение.

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка (размер годовой арендной платы)** -79880 (семьдесят девять тысяч восемьсот восемьдесят) рублей.

**Сумма задатка** – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы земельного участка (15 976 руб. 00 коп.).

**Шаг аукциона** – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы земельного участка (3 994 руб. 00 коп.).

**Срок аренды** – 5 лет.

Информация о проведении аукциона:

**Перечень документов, представляемых заявителем для участия в аукционе:**

1. Заявка на участие в аукционе (в установленной форме) в 2-х экземплярах, с указанием реквизитов счета для возврата задатка. Заявки на участие в аукционе принимаются в кабинете № 312 по рабочим дням по адресу организатора аукциона со дня опубликования данного извещения.

2. Платежный документ (и его копия), подтверждающий внесение заявителем задатка. Задаток перечисляется на реквизиты: получатель платежа – финансовый отдел администрации Моргаушского района, ИНН 2112001366 КПП 211201001, лицевой счет 05123ЧМ0012 в финансовом отделе администрации Моргаушского района, р/счет: 40302810175025013018 в Чувашском отделении №8613 ОАО «Сбербанк России», кор/счет 30101810300000000609, БИК 049706609. В платежном поручении необходимо указать назначение платежа (адрес участка) и дату аукциона.

Задаток возвращается всем претендентам аукциона, в соответствии с условиями договора о задатке, кроме победителя, в течение 3-х банковских дней со дня подписания протокола о результатах аукциона.

3. Выписка из Единого государственного реестра юридических лиц – для юридических лиц, выписка из Единого государственного реестра индивидуальных предпринимателей – для индивидуальных предпринимателей, копии документов, удостоверяющих личность – для физических лиц.

Заявителем предоставляется опись документов в 2-х экземплярах, один из которых с указанием даты и времени (часы, минуты) приема заявки, удостоверенные подписью уполномоченного лица организатора аукциона, возвращается заявителю.

Срок приема и окончания приема заявок на участие в аукционе – с 08 июля 2013 года по 12 августа 2013 года.

Организатор аукциона вправе отказаться от проведения аукциона не позднее, чем за три дня до даты окончания срока подачи заявок на участие в аукционе.

С документацией об аукционе, в том числе с проектом договора аренды земельного участка можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, каб. № 312.

Дата, время и порядок осмотра земельного участка на местности: по предварительной записи в отделе имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района после публикации данного извещения.

**Требования к участникам аукциона:**

В аукционе на право заключения договоров аренды земельных участков может принять участие любое юридическое лицо независимо от организационно-правовой формы, формы собственности, места нахождения и места происхождения капитала или любое физическое лицо, в том числе индивидуальный предприниматель, претендующее на заключение договора, соответствующие требованиям, предусмотренным документацией об аукционе, и подавшее заявку в установленные сроки на участие в аукционе.

Рассмотрение заявок на участие в аукционе на предмет соответствия требованиям, установленным документацией об аукционе, состоится на заседании комиссии **13 августа 2013 года** в 16.00 часов по адресу организатора аукциона. Ознакомление с земельным участком на местности: в рабочее время по предварительному согласованию с представителем отдела имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района.

Победителем аукциона признается лицо, предложившее наиболее высокую цену годового размера арендной платы. По итогам аукциона оформляется протокол, который является основанием для заключения договора аренды земельного участка. Договор аренды земельного участка заключается в срок не позднее 5 рабочих дней со дня подписания протокола.

Определение участников аукциона состоится **14 августа 2013 года** по адресу: 429530, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, 3 этаж, каб. 312. Время проведения открытого аукциона (по московскому времени): Лот №1- 10.30.

# Кил тата хушма хуçалăх



## Пĕчĕк вăрттăнлăх

Пахчара кăткăсене пĕтерме 1 литр шыва 6 кашăк апат соди ямалла. Çак шĕвеке кăткă йăвине 20 – 30 сантиметр тарăнăшне ямалла. Усă курса пăхăр! Кăткăсем сире текех тарăхтармĕç.

## Пысăк тухăç илес тесен

**Ыйту – хурав**

**Çумăр чылай хушă çуманни çĕр улми тухăçĕ çине те витĕм кӳретех тесе шутлатпăр. Нӳрĕк сахал вăхăтра «иккĕмĕш çăкăр» пуссинче мĕн тусан аванрах?**

**Л. ПАВЛОВА.**

Çĕр улми тулăх анана кăна мар, çителĕклĕ сывлăш кĕрекен кăпăшка çĕре те юратать. Çĕр улмишĕн çĕр сывлама пултарни нӳрĕк пуррипе танах. Çавăнпа та «иккĕмĕш çăкăр» çеçкисем 10–12 сантиметра çитсен вĕсене çине тăрса купаламалла. Çак ансат тата пурте пурнăçлама пултаракан ĕç çĕр улми тухăçне 25 – 30 процент ӳстерет. Манас çук, вăрăма кайнă шăрăх та типĕ çанталăкра çĕр улми кассисене тарăн кăпкалатни, ретсене купалантарни вырăнлă ĕç мар, мĕншĕн тесен ахаль те сахал нӳрĕк туххăмрах пăсланса пĕтет.

Типĕ кунсенче çĕр улми речĕсем хушшинчи ăшăх кăпкалатусем (5–6 сантиметр) вырăнлă. Çав вăхăтрах çумăр çуса иртсен е шăварса пĕтерсен объязательнăй йĕркепе касăсем хушшине кăпкалатса тăпрана ретсем çумне купалантармалла. Çакă хушма çимĕçсем тытăнма пулăшать. Çĕр улмине алăпа шăварнă чух пĕр лейка шыв çĕр улмин 2–3 тĕммине çитет.

## Сулхăнра аван ӳсеççĕ

**Хĕвел сахал ӳкекен вырăнсенче мĕн ӳстерсен лайăх-ши?**

**А. ПОПОВ.**

Çĕрпе туллин усă курасси – патшалăх шайĕнче хускатнă ыйту. Ял çыннин килти хуçалăх экономики вара пахча аталантарăвĕпе тачă çыхăннă. Кашни пахчарах хĕвел сахал ӳкекен вырăнсем пулаççĕ. Мал ĕмĕтлĕ пахчаçăн çав лаптăксене те усăсăр вырттарас килмест. «Ун пек çĕрте чечек калчисем ӳстерме пулать-и тата мĕнле чечексем вăл вырăнсене тиркемеççĕ?» – кăсăкланаççĕ ял çыннисем.

Вĕсен ыйтăвĕ çине çапла хурав пур:

– Ун пек вырăнсенче чечексем ӳстерни лайăх. Сулхăнрах вырăнсене чăтăмлă чечексем вара çаксем: упа сарри, атăш куракĕ (папоротник), хоста (функия), тутлă чечек (медуница сахарная), ветреница (апрель уйăхĕнче чечеке ларать), виноград çулçиллĕ ветреница (августра çеçке çурать), дицентра (июнь – август), май уйăхĕнче чечеке ларакан писев куракĕ (купена многоцветная), лантăш, пӳрнеске куракĕ (наперстянка пурпурная), апрельте чечеке ларакан пĕвер куракĕ (печеночница благородная).

Тĕмпе ӳсекенсенчен сулхăнрах вырăнсенче çаксем лайăх çитĕнеççĕ: гортензи тата вейгела.

Хĕвел кăштах кăна лекнĕ çĕрте астильба, шăнкăрав куракĕ, примула, лилейник, чăмăр чечек (купальница) çитĕнтерме пултаратăр.

**Ыйтусем çине А. СЕМЕНОВ агроном хуравларĕ.**

## Нитрат шайне мĕнле чакармалла?

**Пахча çимĕç мĕншĕн нитрат пухни пирки пĕлес тенĕччĕ. Çимĕçри нитрат шайне вара мĕнле чакарма пулать-ши?**

**Р. ИВАНОВА.**

Нитратсăр пахча çимĕç, улма-çырла çук. Анчах та унăн шайне этем сывлăхне сиен кӳрекен виçерен иртермелле мар. Пахча çимĕç çитĕнтерекен лаптăка виçерен ытлашши органика удобренийĕсем хывсан нитрат йышлă пулать.

Унăн çимĕçри виçине чакарма вара тĕрлĕ мелпе усă кураççĕ. Чи ансат мел вăл – шыв. Çĕр улмине хуппинчен тасатнă хыççăн тураса сивĕ шыва çур сехетлĕх лартăр. Унтан вара шывне тăкăр.

Пĕçернĕ кăшмана тӳрех сивĕ шыва ярсан та нитрат виçи чакать. Кăшман мĕн чухлĕ хăвăртрах сивĕнет, унăн шайĕ çавăн чухлĕ сахалрах пулать. Паллах, нитратсемпе пĕрлех витаминсемпе минералсем те «çăвăнса» тухаççĕ. Анчах та вĕсен виçи пĕçернĕ чухнехи виçерен ытла пулаймасть. Чи кирли вăл – нитрат сирĕн сывлăха сиенлеменни.

### Укроп «пухавçă»

Çак культура вара нитрат хăвăрт пухать. Çавăнпа та ăна ӳстернĕ чухне азот удобренине виçерен ытлашши хывма юрамасть. Укропа тислĕк çителĕклĕ хывнă лаптăкра ӳстеретĕр пулсан ытти удобренипе апатлантарма кирлех мар.

Йăрансене апатлантарнă чухне мочевина виçи кашни тăваткал метр лаптăк пуçне 2 грамран ытлашши пулмалла мар.

Укропа аммиакпа, кальципе тата натри селитрипе те апатлантарма юрамасть, мĕншĕн тесен çак япаласем нитрат виçине ӳстереççĕ.

Çимĕçе пухса кĕртиччен 24 – 25 кун маларах пачах та апатлантармалла мар. Нитрат укроп тунинче ытларах пухăнать, унăн виçи çулçăрипе танлаштарсан 50 процент чухлĕ ытларах. Çавăнпа та тунисене пĕрремĕш блюдăсем хатĕрленĕ чухне, пахча çимĕç тăварланă тата маринадланă çĕрте кăна усă курмалла. Ача-пăча валли хатĕрлекен тата диета апат-çимĕçне, салата хушма çулçисем юрăхлă. Укроп турачĕсене шывра 2 сехетлĕх лартни нитрат виçине 15 – 20 процент чухлĕ чакарма пулăшать.

**Алă ĕç ăстисем**

# «Ачалăхри кĕтӳç пушши асрах»

Районти 36 пин çынлă туслă çемьере тĕрлĕ ăстасем нумайăи савăнтарать, ырă шанăçпа пурăнма, çĕннине алла илессипе тăрăшма хавхалантарать. Ку туртăм пурнăçри йывăрлăхсене парăнмасăр аталану çулĕпе пыма пулăшать. Пуçра çакнашкал шухăш тĕвĕленчĕ Мăн Сĕнтĕр салинчи Иосиф Прохоровичпа унăн ывăлĕн Аркадий Ивановсен килти хушма хуçалăхĕсене çитсе курсан, вĕсен ĕçĕпе çывăхарах паллашсан...



**Иосиф Прохоровичпа Аркадий черетлĕ саккас хатĕрленĕ вăхăтра. Çак ĕçе вĕсем хăйсем валли хатĕрленĕ ятарлă ĕç пӳлĕмĕнче пурнăçлаççĕ. Илемпе интересленекенсем вĕсемпе çыхăнсан йăнăшмĕç.**

Ялта çуралса ӳснĕ çын ачаллах çĕр ĕçĕпе туслашать, алă ĕçĕ патне туртăнать. «Вăрçă ачисем эпир. Аслисем фронтра нимĕç фашисчĕсене тустарнă чух пирĕн те сывлăх хавшаккине пăхса ларма майĕ пулман. Хамăр пĕчĕккине пăхмасăрах пур çĕрте те асаннесемпе аннесене пулăшма васкаттăмăр. Çапла вара эпир те хамăрăн пĕчĕк вăйсемпе Аслă Çĕнтерĕве çывхартнă. Çав çулсенче ĕçпе туслашни пирĕншĕн ĕмĕрлĕх шкул пулчĕ», – хăйĕн ĕçĕпе паллашма Аркадий ывăлĕн хуçалăхне чĕнсе калаçрĕ ачаран инвалид И. Иванов.

Иосиф Прохорович Оринин салинче хресчен çемйинче çуралса ӳснĕ. Гурийпе Валерьян пиччĕшĕсем пуррине пăхмасăрах вăл ачаллах аслисен çурăмĕ хыçне пытанма вĕренмен. Аслисем тата ашшĕ-амăшĕ хушнă ĕçшĕн ответлăха туйса ӳснĕ, пурнăçра хăйĕн вырăнне шыранă, тупнă.

### Чун юратăвĕ

Халăхăмăр ĕç çынна илем кӳрет тени манăн черетлĕ тĕл пулура та умран каймарĕ. Манăн пĕлĕшĕм 1939 çулта çуралнă. Утма пуçласанах хресчен ĕçĕпе туслашнă та ял пурнăçне хăйĕн çул-йĕрĕ туса хунă.

– Эпир пĕчĕккĕ чух ялта ача-пăча нумайччĕ. Çавăнпах вăйăра та, ĕçре те кичем марччĕ. Тупăшса выляттăмăр, ăмăртса ĕçлеттĕмĕр. Ку ĕç йывăр, эпĕ пултараймастăп тени пулман. Çур акирен пуçăнса кĕр акичченех лаша çинчен анмасттăмăр. Лаша пăхма кайсан çĕр выртнă чух ĕçсĕр аптăраса шăхличĕсем ăсталаттăмăр. Выляврă çак ĕç пурăна-киле манăн пурнăçра хăйне евĕр ĕç никĕсĕ пулса тăчĕ. Çавăнтан пуçласа паян кунччен эпĕ йывăçран тĕрлĕ япала касса илемлетмесĕр пурăнаймастăп. Ку ĕç мана илемлĕх тĕнчипе çыхăнлатать, çынсемшĕн тăрăшарах ĕçлеме, вĕсене те илемлĕхе туйма вĕрентме хавхалантарать, – терĕ йывăçран тĕрлĕ япаласем хатĕрлес тата касса кăларас туйăм никĕсленнипе паллаштарса Иосиф Прохорович.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче харпăр хăй аллипе ăсталанă шăхличĕсем, тăрăшса илемлетнĕ пушă аврисем, кукăль хума хатĕрленĕ ывăссем килти хушма хуçалăх илемĕ, ял ачин пултарулăхĕ, çемье пуянлăхĕ шутланнă. Ăна тăвакана ял çыннисем ăста тесе хакланă. Сăмахăмăр çакăн патне çитсессĕн Иосиф мучи хăйне ăста тенине хирĕçлерĕ. «Кашнийĕнех алли мĕн патне те пулсан çыпăçать. Ăна ăнланса çул пама çеç пĕлмелле. Çак ăнланупа пăхсан ялта пурăнакан кашни хресчен ачийĕнех вăл е ку ăсталăх пур», – терĕ сăпайлăн аслă юлташăм ывăлĕн килĕ еннелле утнă май.

Алă ăсти çул çинчи калаçурах тĕрлĕ йывăçпа мĕн тунă чух меллĕреххи пирки, хăш йывăç материалпа асăрханулларах пулмалли çинчен каласа пачĕ. Харпăр хăй аллипе ăсталанă хатĕрĕн ĕмĕрĕ те вăрăмрах пулать-мĕн, унăн усси те ытларах, çемье бюджечĕн перекетлĕхĕ те сумлăрах. Нумаях та вăхăт иртмерĕ, çапла калаçса утса тăпăл-тăпăл тепĕр çурт патне çитсе тăтăмăр. Иосиф мучи кил картине хăй килне кĕнĕ пек кĕрсе кайрĕ.

– Пирĕн ĕçĕн тĕп вырăнĕ çакăнта. Кунта килсе ывăлăмпа пĕрле ĕçлесе чунăма уçатăп, хам тума пултарнипе киленетĕп. Мĕн кирлĕ ĕнтĕ саккăрмĕш теçеткепе пыракан старике, – малалла иртме сĕнсе калаçрĕ вăл.

Тĕрлĕ тапхăрта пурăннă пулин те, Иосиф Прохорович ашшĕ-амăшĕн йăли-йĕркине тытса пырса Турра ĕненме пăрахман. 1974 çулта Мăн Сĕнтĕрте пурăнма никĕсленсен, тепĕр 16 çултан салара чиркӳ уçăлсан унăн старости пулса та тăхăр çул ĕçлеме ĕлкĕрет ветеран. «Çакăнта вăй хунишĕн Турă хама тав тунине каярахпа ăнлантăм. Çав çулсенче манпа пĕрле чиркĕве Аркадий ывăлăм та час-часах тухатчĕ. Чиркĕве илем кĕртессипе ĕçлекен Саша художникран ывăлăм йывăç касма вĕренчĕ те ку ăсталăха самай аталантарма пултарчĕ. Ăна çак çул çине тухма Турри пулăшрĕ тесе шутлатăп паян», – терĕ вăл хамăра хирĕç тухнă çамрăк арçынпа тĕл пултарса.



**Ал ĕç ăстисен черетлĕ хатĕрĕ – кил-çурт илемĕ.**

### Аркадий

Ачаран ĕçрен ютшăнман арçын ача ашшĕн ăсталăхне курса ӳснĕ май шкул çулĕсенчех тантăшĕсенчен хитререх ӳкерессипе палăрнă. Ачалла вĕренни чул çинче тенĕ пек Аркадийшăн та ӳкерес хăнăху ĕмĕр тăршшĕпех кирлĕ пулса тухнă. 1989 – 1991 çулсенче сывлăш-çар десантĕнче службăра тăнă чух та Мăн Сĕнтĕр каччи ачалăхри ӳкерес юратăва манăçа кăларман.

– Çарта чухне эпĕ хитре ӳкернине пĕлчĕç те манăн хамăр чаçри художник ĕçне нумай пурнăçлама тиврĕ. Киле каякан салтаксем (дембельсем) альбомсем тума шанни те ăсталăхăм шайне çирĕплетрĕ çеç. Çапла вара ӳкересси чун юратăвне куçрĕ, – терĕ манăн пĕрремĕш ыйту çине хуравланă май кил хуçи.

Действительнăй çар службине кайиччен мал туртăмлă Аркадий производствăра ĕçлеме токарь специальноçне алла илнĕ. Ӳкĕнмест вăл çак ĕçе суйланишĕн. «Тимĕрпе пĕр сăмах тупма пултарни йывăçпа ĕçлеме те пулăшрĕ кăна», – терĕ вăл калаçăва тăснă май. Çартан таврăнсан та каччă хăй суйласа илнĕ профессипе 3 çул Мăн Сĕнтĕрти «Сельхозтехника» пĕрлешӳре вăй хурать. Хăй ĕçне ăста пĕлекенскер çынсене тĕрлĕ япала ăсталаса пама та ӳркенмест.

– Çав вăхăтрах аттене пулăшма Мăн Сĕнтĕр чиркĕвне çӳрекелерĕм те, Турă пулăшнипе пулас, йывăçран касас шухăш вăй илчĕ. Çапла вара 1995-мĕш çултанпа тĕрлĕ хатĕрсене йывăçран касса кăларса сутассипе тăрăшатăп. Манăн паянхи тĕп ĕç вырăнĕ – Мăн Сĕнтĕрти «Потап» фирма. Юлташăмпа иксĕмĕр кунта ялсене тухса алăксемпе чӳречесем лартассипе тăрăшатпăр, – терĕ Аркадий паянхи кун патне таврăнса.

Иртнĕ çул ашшĕпе ывăлĕ Аркадийăн килти хушма хуçалăхĕнче ăшă мастерской хута янă. Халĕ ĕнтĕ хĕллехи сивĕсенче те çынсен саккасĕсемпе йывăçран касса тĕрлĕ илемлĕ хатĕрсем ăсталама пулать. Çĕнĕ ĕç условийĕсем Аркадийăн ывăлĕсене те – Андрейпа Олега – йывăçпа ĕçлеме çул уçаççĕ. Вĕсен амăшĕ Елена Александровна та хуньстарикĕн, мăшăрĕпе ывăлĕсен тимлĕхĕшĕн пĕрре те канăççăрланмасть.

Çын ĕçпе илемлĕ! Пирĕн паянхи тĕслĕх çакна çирĕплетрĕ. Сирĕн ялта çакăн пек пултаруллă çынсем пур-и?

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

# Телепрограмма

**с 8 по 14 июля 2013 года**

## ПОНЕДЕЛЬНИК, 8.07

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 4.25 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 12+
15.15 «Я подаю на развод» 16+
16.10 Т/с «ЖЕНСКИЙ ДОКТОР» 16+
17.00 Т/с «ПРОСПЕКТ БРАЗИЛИИ» 16+
18.50 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ОТРАЖЕНИЕ» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.00 «Городские пижоны» «Викинги» 18+
0.55 Х/ф «СЛИШКОМ КРУТА ДЛЯ ТЕБЯ» 18+
2.50, 3.05 Х/ф «ГУРУ» 16+

### РТР

5.00 Утро России
9.00 «1000 мелочей»
9.45 «О самом главном»
10.30 «Кулагин и партнеры» 12+
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ТАЙНЫ ИНСТИТУТА БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ»
16.00, 17.30 Т/с «ВЕРОНИКА. ПОТЕРЯННОЕ СЧАСТЬЕ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ЛЮБОВЬ НА МИЛЛИОН» 12+
22.55 Т/с «РАСКОЛ» 16+
1.00 «Вечный человек, или Повесть Туринской Плащаницы»
1.45 1.55 Вести +
2.20 Т/ф «АМЕРИКАНСКАЯ ТРАГЕДИЯ»
3.40 Т/с «БОЛЬШАЯ ЛЮБОВЬ-5» 16+

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чӑваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чӑваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чӑваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия
**На канале «Россия 2»**
6.30-7.00 Вести-Спорт-Чувашия

### КУЛЬТУРА

7.00 «Евроньюс»
10.00, 15.40, 19.30, 23.40 Новости культуры
10.20 «Наблюдатель»
11.15, 19.45 «Острова»
11.55 Х/ф «ПОСЛЕСЛОВИЕ»
13.35 Д/ф «Асматы»
14.30 Важные вещи. «Трость А. С. Пушкина»
14.45 «Линия жизни»
15.50 Х/ф «ПИКОВАЯ ДАМА»
16.45 «Мировые сокровища культуры»
17.00 Д/ф «Молнии рождаются на земле. Телевизионная система «Орбита»
17.40 «Западноевропейская музыка эпохи модерна» Альбан Берг и Антон Веберн
18.30, 1.35 Д/ф «Лукас Кранах Старший»
18.40 «Полиглот»
20.30 «Кто мы?»
20.55 Д/ф «История морских сражений»
21.55 К юбилею актрисы. «Лия Ахеджакова. Обаяние отваги»
22.25 По следам тайны. «НЛО: пришельцы или соседи?»
23.10 Д/с «Завтра не умрет никогда»
0.00 Д/с «Удивительный мир Альбера Кана»
0.55 «Вслух» Поэзия сегодня
1.40 Academia
